# Вăрçă ачисем: “Аттен хуткупăсне çур пăт тулăлла сутма тиврĕ...” ●2 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

49(919) №, 2015, раштав/декабрь, 12
Хакĕ ирĕклĕ.
16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

● Чăраша мĕнле ăшăтмалла? 3 стр.
●Хăнара çывăрнăшăн айăпланă 5 стр.
●Суханăн хуппи те усăллă 8 стр.
●Асăрхăр, конкурс – “Чăваш хĕрарăмне” халалланă такмаксем 10 стр.
●Президент арăмĕ пулма çăмăл-и? 11 стр.

ÇĂЛТĂР ÇŬПÇИ

## Арçыннăн çирĕп пулмалла

– Ĕлĕк сцена çине тухасси, паянхипе танлаштарсан, чылай кăткăсрахчĕ. Министерство та, районти культура центрĕсем те çирĕп ыйтатчĕç. Пултаруллисене тĕрлĕ конкурс йĕркелесе шыратчĕç. Паян халăх умне тухасси ансатланса пырать. Кăмăл тăвакансем, укçа-тенкĕ енчен аптăраманнисем, ку ĕмĕте ним мар пурнăçлаççĕ. Харпăрлăхри студи нумай халĕ. Укçа тӳлесен темĕн те туса параççĕ вĕсем. Сцена çине кĕвĕ-çемĕ туйăмне пĕлменнисем тухни чăваш эстрада шайне чылай чакарчĕ темелле. Епле ан пăшăрхантартăр-ха çакă?



Александр ИЛЬИН, юрăç

Сцена çинче çамрăксем те кирлĕ, анчах чăннипех пултаруллисем, хастаррисем. Ун пеккисем çук мар-çке. Вĕренеççĕ вĕсем, ăсталăхне тĕрлĕ майпа туптаççĕ, малаллах талпăнаççĕ. Маттурсем. Хисеплетĕп вĕсене.

Çĕрпӳри культура çуртĕнче ĕçлетĕп. Кунта вокалпа инструментсен эстрада ушкăнне йĕркелерĕмĕр. Унта чылайăшĕ ятарлă пĕлӳллĕ.

Юрăçсен пурнăçне çăмăл тееймĕн. Бюджет учрежденийĕнче çеç тăрăшнипе пурăнма çук. Ирĕксĕрех урăхла меслетпе ĕçлесе илме тивет. Тепĕр чухне вара искусство, культура çыннисене укçа та кирлĕ мар – культура, искусство шайне ӳстерессишĕн ахалех тăрăшаççĕ вĕсем.

Тĕрĕссипе, пурнăçа ӳпкелеме сăлтав курмастăп. Кăмăл туртсан, тăрăшсан темĕн те тума пулать. Унччен туянма япали çукчĕ, кирлине тупма йывăрччĕ. Халĕ вара кун пек ыйту çук. Мул çеç пултăр. Вăл вара... Пуçа лайăх шухăшлаттарсан тĕрлĕ май çаварттарса кăларма пулатех. Арçыннăн хăть те хăçан та çирĕп пулмалла. Темле лару-тăруран та тухма пĕлмелле. Тăрăшсан палăртни пулатех тесе шухăшлатăп. Арçыннăн, ан кӳренĕр те, хĕрарăм пек нăйăлти пулмалла мар, килĕшӳсĕр ку.



Марина ТУМАЛАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

Аслă Елчĕкре пирĕн хаçата юратса вулаççĕ. Кермен пек çуртсенче пурăнакансем алă ĕçне те ăста. Мария Зайламова яланхи пекех – çĕвĕ машини умĕнче.

# «Хăвăрт» хушма ятлăскер

4 стр.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 12.12 | – 1 | – 2 |
| 13.12 | – 1 | – 1 |
| 14.12 | – 1 | – 2 |
| 15.12 | – 3 | – 5 |
| 16.12 | – 5 | – 7 |
| 17.12 | – 7 | – 9 |
| 18.12 | –11 | –12 |

Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче çеç “Хыпар” Издательство çурчĕн мĕнпур кăларăмне ЙŸНĔ ХАКПА çырăнтараççĕ
*“ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ” (индексĕ Д1515) – 316,50 тенкĕ*

ХАÇАТ ТУСĔ

# Самуил пичче хĕрĕ

Самуил пиччепе Плаки аппа манăн кӳршĕсем пулнă. Урама тăрăхла йывăç çуртра пурăнатчĕç. Илле мучи шултăра хыр пĕренинчен тăпăл-тăпăл пураланăскер килĕшнĕ вĕсене. Лешсем çемйипех Тутар Республикине куçса кайнăран çуртне сутса хăварнă. Турхан Упи каччипе хĕрĕ пĕр-пĕрне ытарайман, куç хывнă, çемье çавăрнă. Ачи-пăчине шăкăринех, сак тулли çуратнă Плаки акка. Пурте хĕрсем, пĕтĕмпе – çиччĕн.

Иккĕшĕ те «Байсубино» колхозра ырми-канми ĕçленĕ. Плаки аппа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех ялти сысна ферминче вăй хунă: çăвăрлаттарнă, самăртнă. Мĕн калăн: ĕçĕ-хĕлĕ пăркăчларĕ, чир-чĕрĕ çулăхрĕ. Сывлăш тухманнипе, тăруках пӳлĕннипе аптăратчĕ кӳршĕ. Апла пулин те: «Пурăнасчĕ-ха», – тетчĕ. Ĕне усратчĕ. Анчах... Пĕр каç шалкăм çапнă ăна. Райбольница та çăлса хăвараймарĕ тăрăшуллă та ĕçчен хĕрарăма. 1931 çулта çуралнăскерне 2000 çулхи утă уйăхĕнче ял масарне пытарчĕç.

Самуил пиччен кун-çулĕ те кĕске пулчĕ. 1917 çулхи юпа уйăхĕнче кун çути курнăччĕ. Ăста платникчĕ, йăмра, хурăн лартма юрататчĕ. Ас тăватăп-ха: çырмара хурăн ращи лартса ӳстерчĕ вăл. Мана та, хăйĕн кӳрши пулнă май, тăван тавралăхпа çывăхлатрĕ. Хĕрĕх çултах çĕре кĕчĕ Самуил пичче.

Ашшĕ-амăшĕ пирĕн хушăра çук пулин те хĕрĕсем тăван килне пăрахмаççĕ. Плаки аппапа Самуил пичче çĕнĕрен çавăрнă хуçалăхне Аня хĕрĕ пăхса тăрать. Шупашкарта пурăнать хăй. Ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕ пур. Шел, Аня та мăшăрне вăхăтсăр çухатрĕ.

Икĕ хĕрĕ – Фаинăпа Нина – яла качча тухрĕç. Малалла Фаина пирки каласа кăтартам-ха. Çичĕ хĕртен иккĕмĕшĕ вăл. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тенешкел, ĕçчен те вăр-вар пулнипе палăрнă хĕрарăм ял-йышра. Тĕрлĕ çĕрте вăй хунă вăл. 2007 çулта сывлăхĕ хавшанăран сусăрсен йышне кĕнĕ. Ялти Ленин урамне урлă вырнаçнă ултă чӳречеллĕ кирпĕч çуртра курнăçрăмăр унпа. Таса та тирпейлĕ кил-çуртра пĕр çӳп пĕрчи асăрхаймăн.

– Сирĕн пата ятарласа килтĕм эпĕ. Сăлтавĕ, паллах, эсир «Чăваш хĕрарăмĕн» уйрăлми тусĕ пулнипе çыхăннă, – сăмах пуçартăм эпĕ. – Ятарласа, редактор хушнипе...

Юлашки сăмахне хамран хушрăмха. Анчах редактор тесен тăруках хĕпĕртерĕ курăнать тулли сăн-питлĕ хĕрарăм. Кулă хумĕ те палăрчĕ.

– 1999 çултанпа çырăнатăп хаçата. Пĕчĕк сĕтелĕ çинче «Чăваш хĕрарăмĕн» номерĕсем курăнчĕç. 12 страницăран пĕр хыпарне те сиктермест иккен. Вăл е ку кăсăклă статьяпа пĕр урамрах пурăнакан 1939 çулта çуралнă Зоя Васильевăпа чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче 75 çул тултарнă Валентина Васильевăна та паллаштарать.

Фаина 2007 çулхи авăн уйăхĕн 3-мĕшне аса илчĕ.

– Килкартинче путек сурăхĕн çăмне касаттăм. Сасартăк пуç çаврăнса кайрĕ, шăм-шак йăвашланчĕ. «Кăштах канса ил», – асăрхаттарчĕ мăшăрăм Толя.

Темиçе минут выртса илнĕ-ха хĕрарăм. Эх, канăççăрлăх ура хурать-çке пире. Тӳсеймест, пуç аптратнине пăхмасăрах ĕçе тытăнать Фаина Данилова.

Шалкăм çапнă хыççăн сулахай аллипе ури лайăх ĕçлемеççĕ. Хăйне ура çине тăратнăшăн Шупашкар тухтăрĕсене, йăмăкне Розăна, хĕрне Надьăна тата ывăлĕсене – Сергейпа Сашăна – чун-чĕререн тав тăвать вăл.

Килте пĕр-пĕччĕнех хăй. Мăшăрĕ 2007 çулта çĕре кĕнĕ. Пилĕк мăнук Фаинăн.

**Георгий ТУСЛИ.**
Красноармейски районĕ.




ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

# «Аттен хуткупăсне çур пăт тулăлла сутма тиврĕ»



«Вутра çуннă ачалăх». Çапла ятпа иртрĕ Етĕрне районĕнчи Тури Ирçе ялĕнчи культура çуртĕнче вăрçă ачисемпе йĕркеленĕ тĕлпулу. Курăк пашалăвĕ, çĕрулми крахмалĕ çисе ӳснĕскерсен, ашшĕсене фронта ăсатнăскерсен пĕр-пĕрне çыхăнтараканни темĕн чухлех. Аса илмелли те пайтах. Пĕр-пĕрне курса калаçни, сывлăхĕсемпе кăсăкланни те пурăнма хăйне евĕр вăй-хал хушать-тĕр.

Вăрçă ачисене пурне те пĕр инкек пĕрлештернĕ, анчах пурин те шăпи расна. Рикс Петровпа унăн виçĕ пĕртăванне кукамăшĕ пăхса ӳстернĕ. Ашшĕ вăрçăра хыпарсăр çухалнине пĕлнĕ хыççăн амăшне шалкăм çапнă. Вырăн çинчен тăраймасăр, вăхăт-вăхăт тăнсăр пулса выртнă вăл. Кукамăшĕ хĕрне чăх тĕкĕ çунтарса унăн тĕтĕмне шăшлаттарса тăна кĕртнĕ. Рикс Савиновичăн мĕн ачаран ĕçлеме тивнĕ. Аппăшĕ пĕчĕк пăрусем пăхнă, кĕтĕве тухасси вара ăна тивĕçнĕ. Çамрăк выльăх шăна-пăван тапăннипе ниçта кайса кĕрейменрен унталла-кунталла чупнă. Вĕсем хыççăн макăра-макăра – арçын ача та.

Выçлăхран килте качака пурри çеç çăлса хăварнă. Паллах, ĕçлеме ӳркенменни те пурăнма пилленĕ. Йыснăшĕ пулăшнипе ялти тимĕрçĕ лаççинче лаша урапи ăсталанă вĕсем. Манька ятлă лашапа 6-мĕш класрах тислĕк турттарма тытăннă Рикс Петров.

Алима Запольская шĕшкĕ кăчкине авăртса пĕçернĕ симĕс пашалу тутине халĕ те астăвать. Кăшкар утинчен пĕçерни вара саркăмрах пулнă. Крахмал пуçтарни те Алима Абрамовна куçĕ умĕнчен каймасть. Ана çинчи пылчăка кĕрсе ларни, Пăрăшни çырминче суха тăвакансем ăна хăма пăрахса кăларни те асĕнчех.

Нина Кириллова ачалăхĕ те вăрçă çулĕсенче иртнĕ. Ашшĕ вăрçа кайнине вăл лайăх астумасть те. Ялти ытти арçынсемпе пĕрлех «Ки-как хуркайăк» юрăпа сывпуллашнă тăванĕ. Алăк хыçне пытанса тăнă хĕрача ашшĕн сăнне те курса юлайман.

### Илемлĕ кĕвĕ астарать

– Вăрçă пуçланнă кунсенчех лав хыççăн лав салтак юрри юрласа иртетчĕ. Арçынсем шурă тутăрĕсемпе суллана май ăсатаканĕсем кăшкăрса макăратчĕç. Нагорное ялĕнче çуралса ӳснĕ эпĕ. Вăл çӳллĕрех вырăнта вырнаçнă. Кӳршĕ ялсем те курăнатчĕç. Унтан та лашасемпе салтаксем каятчĕç. Тĕнче пĕтсе килнĕн туйăннăччĕ мана, – аса илет Роналия Трофимова.

Вăрçă пуçлансан вĕсен ашшĕ те амăшне 7 ачипе пĕччен хăварса çапăçу хирне тухса кайнă. Мускава хӳтĕленĕ çĕрте те, Украина фронтĕнче те пулнă вăл. 1944 çулта контузи пулнăран килне таврăннă. Кайран çемьере 8-мĕш ача та кун çути курнă.

Хаяр вăрçă пуçланнă чухне 5-мĕш класра вĕреннĕ Роналия Александровна. Çемьери иккĕмĕш ача пулнă вăл, çавăнпах пĕтĕм йывăрлăхĕ ун çине тиеннĕ. Çĕрулми крахмалне те, шĕшкĕ кăчкине те, çăка хунавне те сахал мар пуçтарнă. Ытти çемьери пекех вĕсен те çимелли пулман. Виçĕ тĕк тӳшеке çĕрулмипе улăштарма, ашшĕн хуткупăсне те çур пăт тулăлла сутма тивнĕ. Унран кĕрпе туса апата кăштах çăратнă.

– 7-8 çулти ачасем те мăн çынсемпе танах вăй хуратчĕç. Ĕçе тухакансене – пĕр курка, ачасене çур курка апат паратчĕç. 60-85 çулти кинемейсем те çум çумлама тухатчĕç, – иртнĕ кунсене куççульленмесĕр аса илеймест ăш пиллĕ хĕрарăм.

7 класс пĕтерсен Етĕрнери учительсем хатĕрлекен училищĕне кайнă вăл. 4 класс пĕтернĕ амăшĕ темле пулсан та кашни тĕпренчĕкнех пĕлӳ пама ăнтăлнă. Çапла ашшĕ-амăшĕ 7 ачине те вĕрентсе кăларнă. Шел, пĕри 7 çула çитсенех вилнĕ.

– Вĕреннĕ çĕрте те çăмăл марччĕ. Апат-çимĕç çитместчĕ, çăкăр та 200 грамм çеç паратчĕç, черете ирхине 4 сехетрех кайса тăраттăмăр. Ăна та килтисем валли илсе кайма тăрăшаттăм, – тет Роналия Трофимова.

Виçĕ çултан направленипе Муркаш районĕнчи Хачăк Салине янă ăна. Часах Вăтам Ирçери вăтам шкула куçарнă. Çапла вăл 42 çул кĕçĕн классене вĕрентнĕ.

– Авăн уйăхĕ. Авăн çапатчĕç. Ялĕ питĕ хитре пек туйăнчĕ – сипсимĕсчĕ. Ун чухне урапа çулĕ анчахчĕ, çавăнпах йĕри-тавра таса курăкчĕ. Тавралăхпа киленсе утса килтĕм, – 1947 çулхи авăн уйăхне куç умне кăларать ĕç ветеранĕ.

1951 çулта Тури Ирçе каччипе Арсентий Арсентьевичпа çемье çавăраççĕ вĕсем. Икĕ хĕрпе икĕ ывăл çуратса ӳстереççĕ. Шел, 1987 çулта кил хуçи чире пула вилет.

Ăçта кăна ĕçлемен пуль вăл? Бригадирта та, шоферта та, колхоз председателĕнче те тăрăшнă. Çамрăк чухне вара киномеханик пулнă.

– Хваттерте пурăнаттăм. Кил хуçи хĕрне Лизăна «кинона пырăр» тетчĕ тет. Каяттăмăр та кĕрейместĕмĕр те. Пĕррехинче хăнана пычĕ, Елизавета патне те хăтана пынă пуль вăл, лешĕ килĕшмен. Калемпе хут ыйтрĕ. Калемне патăм-ха, хут – çук. Ун чухне сĕтел çитти пулманран обой сараттăмăр. Çавăн кĕтессине чăр! кăна çурса илчĕ те темĕн çырса мана тыттарчĕ. «Мана качча тухатăн-и?» – тенĕччĕ унта. Эпĕ нимĕн те шарламарăм. Вăл чĕнмесĕр тухса кайрĕ. Купăс калатчĕ тата вăл. Илемлĕ кĕвĕ астарать вĕт. Кайран ашшĕпе иккĕшĕ пычĕç хăтана. Килĕшрĕм. Тен, каймастăм та пулĕ. Ара, пирĕн 5 хĕр-çке. Нихăшĕ те качча кайманччĕ. Аннесен пепкисене вată хĕр ятне илттерес килмест-çке, пурне те вырнаçтармалла. Эпĕ те 24 çула çитнĕччĕ. Анне ялан «илекен пулсан – каймалла» тетчĕ.

Эпĕ хирĕçме пĕлместĕп. Ку таранччен çынпа та ятлаçса курман. Ачасене те килте вăрçса ӳстермен. Тен, çавăнпах лăпкă çитĕнчĕç пуль, – сăпайлăн калаçать канлĕ ватлăхри вĕрентекен.

Пĕччненех пурăнать халĕ хĕрарăм. Ачисем кашни хăйĕн çемйипе тĕрлĕ хулара-ялта тĕпленнĕ.

– Хамах пĕçеретĕп, хамах çăватăп-тасататăп. Пахчара та ĕçлетĕп. Хăнăхнă та пĕччен те ним йывăрри те çук. Кĕнеке вулас килсен – вулатăп, çывăрас тесен – выртса канатăп. Хампа хам хуçа, – тет Роналия Александровна шӳтлесе те чăнласа.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.



СПОРТ

# «Çĕнтерме хатĕррине çиçекен куçăрсенче куратăп»



Раштав уйăхĕн 10-11-мĕшĕсенче «Шупашкар-Арена» Пăр керменĕнче ЧР Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрсен хушшинче Раççей кубокĕ иртрĕ. Ку ăмăртăва пирĕн республикăра виççĕмĕш хутчен йĕркелерĕç. Пĕлтĕртенпе вăл тĕнче шайĕнчи ăмăрту шутланать. Çавăнпах унта Азербайджан, Беларуç, Казахстан, Монголи, Швеци, АПШ спортсменĕсем те хутшăнаççĕ.

Раççей чысне Чăваш Ен спортсменĕсем те хӳтĕлерĕç. Шăпах вĕсенчен пиллĕкĕшĕпе – Надежда Федоровăпа, Екатерина Красновăпа, Наталья Гольцпа, Мария Кузнецовăпа тата Вероника Чумиковăпа – ытларикун Михаил Игнатьев тĕл пулчĕ. ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ Алла Салаева, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Шелтуков, ЧР спорт кĕрешĕвĕн федерацийĕн президенчĕ Алексей Лапшин, ЧР пĕрлештернĕ командăн тĕп тренерĕ Ольга Смирнова та хутшăнчĕç унта.

Чи сумлă турнирсенче палăрнă маттур хĕрсем кавир çине пĕрремĕш хутчен епле лекнине те аса илчĕç.

Наталья Гольц çемйинче, сăмахран, пурте спортпа туслă. Çавăнпах ӳссен кам пуласси ачара ыйту çуратман. Аслашшĕ çамрăклах çăмăл атлетикăпа туслашнă, халĕ те куллен чупма тухать. Ашшĕ çар çынни пулнă май ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ăмăртăвĕсене кăмăлланă, хăйĕнпе пĕрле ывăлĕпе хĕрне те тренировкăсене илсе çӳренĕ. Ашшĕнчен тĕслĕх илсе çумăрта та, тăманра та ачисене ирсерен чупма илсе тухнă. Çавăнпах тăраничкен те çывăрса курайман Наталья ачаранах спортра тĕрекленнĕ.

Екатерина Краснова ашшĕпе амăшĕ вара хĕрĕн кĕрешес ĕмĕтне ырламан. Ташлама сĕннĕ ăна. Анчах ачара кĕрешес туртăм вăйлăрах пулнă курăнать, ахальтен-и вăл ташă кружокне çӳренĕ пулин те пурнăçне спортпа çыхăнтарнă.

Ялта çуралса ӳснĕ Надя ытти ача пекех кĕлеткине ĕçре çирĕплетнĕ. Килти хуçалăхра пурнăçлама шаннă ĕçсене вĕçлесенех шкулти çăмăл атлетика секцине чупнă. Кунта хăйне тупайманнине ăнлансан ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен йышне кĕнĕ. Малтанхи çитĕнӳсемех хавхалантарнăран вăл пурнăçне спортпа çыхăнтарма палăртнă.

Вероникăна кĕрешме юлташĕн çитĕнĕвĕ хавхалантарнă. Шăхасанти шкула кĕрешӳ секцине çӳрекен тусĕ часах ăмăртусенчен медальсемпе таврăнма тытăннă. Вероникăн та унран юлас килмен, 7-мĕш класра вĕреннĕ чухне вăл та çак секцине кайса çыраннă.

Мария Çĕнĕ Шупашкарта çуралса ӳснĕ. Ольга Смирнова тренерпа пĕр картишре пурăннă вĕсем. Аслисемпе пĕрле пĕчĕк хĕрача та футболла выляма юратнă. Унăн йăрăлăхне, хастарлăхне Ольга Владимировна çавăн чухне асăрханă та. Кĕрешӳ секцине çырăнма сĕннĕ. Паллă спортсмена итленĕ Мария. Тĕлĕнмелле те, халĕ кĕçĕнни ăсталăхне шăпах асли патĕнче туптать.

– Сирĕн çине пĕтĕм Чăваш Ен пăхĕ. Пăр керменĕнче 5 пин яхăн çын пулĕ. Эсир республика чысне тивĕçлĕн хӳтĕлессе шанатпăр. Çитĕнӳсем тума хатĕррине çиçекен куçăрсенче куратăп, – терĕ Михаил Васильевич ăмăрту пĕрремĕш хутчен шоу мелĕпе иртнине палăртса. – Олимп спорчĕн тĕсĕсенчен пĕрне – хĕрарăмсен кĕрешĕвне – çынсем те курччăр. Эсир – лидерсенчен пĕрисем! Çамрăксемпе ачасем сирĕн çине пăхса спортпа туслашчăр, сывă пурнăç йĕркине ăша хывччăр. Сирĕнтен хăшĕ-пĕри Олимп вăййине хутшăнмашкăн çĕршыв командине кĕрессе шанатăп, – терĕ ЧР Пуçлăхĕ хĕрсене ăнăçу суннă май.

Сергей Сильвестрович та ирĕклĕ майпа кĕрешесси спортăн анлă сарăлнă тĕсĕсенчен пĕри иккенне палăртрĕ. Республикăри секцисемпе шкулсене 3 пин ытла çамрăк çӳрет.

– Эсир килте кĕрешетĕр, кунта стенасем те пулăшаççĕ. Тепĕр енчен вара сирĕнте – калама çук пысăк яваплăх. Тăвансен, юлташсен умне тухни хумхану кӳретех. Çак самантсем сирĕн кăмăла витĕм кӳменнине, хăвăра алăра тытма пултарнине шанатăп, – терĕ спорт министрĕ.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче, кĕçнерникун, малтанхи тупăшусем иртрĕç. Ĕнер ирхи кӳлĕм хĕрсем «бронза» медальсене салатрĕç. Каçхине вара кавир çинче «ылтăншăн» кĕрешрĕç. Хĕрсем яланхи пекех 8 виçере вăй виçрĕç. Эстрада çăлтăрĕсем спорт ăмăртăвне чăн-чăн уява çаврăнчĕç.

Çĕнтерӳçĕсемпе, уяв саманчĕсемпе тĕплĕнрех çитес номерте паллаштарăпăр.

**Татьяна НАУМОВА.**

СЫВЛĂХ

# Вĕри чĕреллисем

**Чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсемпе кĕрешмелли çулталăк вĕçленсе пырать. Сывлăха çирĕплетес тĕлĕшпе республикăра нумай мероприяти иртнине палăртса хăварас килет. Ĕнер, тĕслĕхрен, пин-пин çын – сывлăх сыхлавçисем, тĕрлĕ тытăмра ĕçлекенсем, тивĕçлĕ канурисем, студентсем, волонтерсем – Шупашкарти Хĕрлĕ тӳреме тухтăрпа пĕрле уçăлса çӳреме тухрĕ. Ку акци пирĕн тăрăхра 2012 çулта вăй илчĕ. Пĕлтĕртенпе Шупашкарта шăматкунсерен иртрĕ. Атăл хĕррипе утнă май тухтăрсем чылай ыйту хуравне тупма пулăшрĕç.**

Куллен 5 пин утăм туни сывлăха çирĕплетнине палăртаççĕ шурă халатлисем. Унсăр пуçне сывă пурнăç йĕркине пăхăнмаллине, тĕрĕс апатланмаллине асра тытмалла.

Чĕрене упрамаллине аса илтерекен нумай плакат хатĕрленĕ акцие хутшăнакансем.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пĕрле пуçтарăнса уçă сывлăшпа сывлама, кăмăла уçма май тупнăшăн пурне те тав турĕ.

– Эсир вĕри чĕреллĕ-и? – ыйтрĕ пуçтарăннисенчен.

– Çапла, – пĕр харăс хуравларĕç çынсем.

Пирĕн тăрăхра пĕр ĕмĕртен иртнĕ 64 çын пурăнать, 5 пин ытла çын 85 çул урлă каçнă.

– Кам 100 çултан иртесшĕн? – калаçăва тăсрĕ Михаил Васильевич. Атăл кӳлмекне пуçтарăннисем пурте алă çĕклерĕç.

Чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсене пула вилекенсен йышĕ кăçал 15 процент чакнине палăртрĕ республика Пуçлăхĕ. Çак кăтартăва çулсерен лайăхлатса пымалли пирки каларĕ вăл.

Раççей спорт кĕрешĕвĕн федерацийĕн пĕрремĕш вице-президенчĕ Омар Муртузалиев Лондонри çурма марафона çулсерен хутшăннине каласа хăварчĕ. Спорт ăмăртăвĕсене кайни те хăйне лайăх туйма пулăшни иккĕлентермест.

Юлашкинчен чĕрене аса илтерекен 5 пин хăмпă тӳпене вĕçсе хăпарчĕ. Хĕрлĕ тӳреме пухăннисем ретĕн-ретĕн тăрса кӳлмек тавра утрĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Чăраша мĕнле ăшăтмалла?

**Марина ТУМАЛАНОВА**

Чи асамлă та хаваслă уяв çывхарать. Эпир Çĕнĕ çула кĕтсе илмешкĕн хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ. Каçхи Шупашкар тĕрлĕ çутăпа ялкăшать. Уяв тумĕллĕ чăрăш куçа илĕртет. Килте мандарин шăрши сарăлчĕ. Хĕл мучипе Юрпике халь-халь çитсе кĕрессĕн туйăнать.

Пасарта-лавккара халăх хĕвĕшет. Пĕри – тетте, тепри парне суйлать. Çав вăхăтрах уяв сĕтелĕ валли апат-çимĕç туянасшăн. Унсăр пуçне хитре кĕпе те, юмах сăнарĕн çи-пуçĕ те кирлĕ.

Япала курттăмăн сутакан лавккара кучченеç тултарма хут курупка илесшĕнччĕ. Ĕнер кăна сентре туллиехчĕ, паян пĕрре те юлман – йăлтах пĕтнĕ. Апла тăк чылай ашшĕ-амăшĕ ача садĕнчи, шкулти тĕпренчĕкĕсем валли парне пуçтарма ĕлкĕрнĕ. Вăхăтра илейменнисем пĕр çĕртен тепĕр çĕреваскаççĕ. Перекетлеме май пуррипе, паллах, усă курмалла. Уявра ахаль те нумай укçа кирлĕ.

Пасарта та уяв хатĕр-хĕтĕрне черет тăрсах туянаççĕ. Пĕри – йӳнĕрех илесшĕн, тепри – хаклăрах сутасшăн. Йăлтăр-ялтăр япала пурне те çитет. Пĕтсен татах илсе килĕç. Çитес çул паллилĕ сувенир суйласа çӳрерĕм. Темли те – пĕчĕкрехххи, пысăкраххи, йӳнĕрехххи, хаклăраххи – пур. Чуна килĕшеккеннине парнелĕх илмешкĕн укçа кăна çиттĕр. Упăте сăнĕллĕ алшăлли те, сивĕтмĕш çинчи магнит та киле ăнăçу, телей, ырлăх илсе кĕччĕрех. Тем тесен те Çĕнĕ çул таварĕ кăмăла уçать, ыррине кĕтме шанăç парнелет.

Уяв витĕмĕпе чылайăшĕ хăйĕн кĕсйине хулăнлатма тăрăшни куçкĕрет. Акă, тĕслĕхрен, вăйăпа кану центрĕсем ятарлă купон хатĕрлеççĕ, ăна канфет курупкине чикеççĕ. Ачасемшĕн çакă та – савăнăç. Тӳлевсĕр вылямалли купон 30-35 тенкĕ тăрать тейĕпĕр. Анчах 1-2 минутранах унтан камăн каялла тухас килтĕр? Кану центрĕнче 400-500 тенкĕ тăкакланни сисĕнмест те. Ачасемшĕн, паллах, нимĕн те шел мар. Мĕнех, пĕр автоматран теприн патне чупчăр, выляччăр, кулччăр!

Çĕнĕ çула хатĕрленнĕ май хăйнеевĕрлĕхпе палăрма май пур. Тĕслĕхрен, Чăваш наци музейĕ «Чăрăша ăшăт» акци пĕлтернĕ. Урамран илсе кĕнĕскерне куçа йăмăхтаракан теттепе, шăрçапа, хăюпа капăрлатма пулать паллах. Анчах музей ĕçченĕсем ятарласах ун валли çăм япала çыхма, йăвалама сĕнеççĕ. Ку ĕçе кирек кам та хутшăнма пултарать. Музей елкине ăшăтма пулăшакансене Раштав уявне чĕнĕç. Вĕсем валли ăсталăх класĕ йĕркелĕç.

Тем тесен те, хамăр ăсталанă тетте чуна çывăхрах. Ахальтен мар республикăри кашни районтах ку енĕпе конкурс йĕркелеççĕ. Çапла майпа ачасен ăсталăхне аталантарма пулать.

Пирĕншĕн кашни утăмрах юмах тĕнчи уçăлать. Шухăш хăватне ирĕке ямалла çеç. «Çĕнĕ çулхи Чăваш Ен тĕп хули» республика конкурсĕ те Шупашкара уяв сăнĕ кĕртме май парĕ. Çĕнтерӳçĕсене 3 номинаципе палăртĕç. Тĕп елкăна капăрлатакансене, Çĕнĕ çул мероприятийĕ йĕркелекенсене, спорт ăмăртăвĕсене хастар хутшăнакансене уйрăммăн чыслĕç. Интернет-сасăлав урлă чи пултаруллисене пĕлĕпĕр. Çакă республика халăхне тата хăнасене канмашкăн хăтлă условисем туса пама, культура объекчĕсемпе паллаштарма тата туризма аталантарма пулăшĕ. Апла тăк канмалли кунсем хаваслă иртесси халех паллă. Унсăр пуçне пушă вăхăтра йĕлтĕрпе, çунашкапа, конькипе ярăнмалла, хĕл илемĕпе киленмелле, юр кĕлетке ăсталамалла!

Театр артисчĕсем уяв тĕлне çĕнĕ спектакльсем хатĕрлеççĕ. Çак ĕçсене те ачасемпе пĕрле курмалла, хакламалла. Сцена ăстисемпе алла-аллăн тытăнса чăрăш тавра çаврăнни те асра юлĕ.

Çитес вăхăтрах культура керменĕсенче, килте, ача садĕнче, шкулта, пултарулăх çурчĕсенче Çĕнĕ çула халалласа мĕн чухлĕ юрă-сăвă янăрĕ! Тĕрлĕ сăнара çаврăннă темиçе ăру çыннисем сехечĕ-сехечĕпе ташлĕç, шӳтлĕç, савăнĕç! Çĕнĕ çула тулли кăмăлпа кĕтсе илĕпĕр!



ХАСТАРРИСЕМ



**Республикăра пурăнакансене лăпкăлăхпа канăçлăх кÿрес тесе патвар та тěреклě арçынсемпе юнашарах этемлěхěн черчен пайě те нумай тăрăшать. МСЧра та службăра хěрарăм сахал мар. Паян эпир Раççей МЧСěн Чăваш Енри Управленийěн шыв çинчи хăрушсăрлăх уйрăмěн эксперт-специалисчěпе Ольга Курдимановăпа тěл пултăмăр.**

# Ачаранах... моряк пулма ěмěтленнě

**– Ольга, хěрарăмшăн кăтартуллă мар тытăма епле лекнě-ха эсир?**

– Эпě кам пуласси ачаранах паллă темелле. Атте Владимир Павлович çар çынни пулнă. Эпě унпа яланах мухтанаттăм, мăнаçланаттăм. Вăл форма тăхăнсан пăхса ытараймастăм. Атте пулă тытма юрататчě, çавăнпах моторлă кимě пурччě пирěн. Пěрремěш хутчен унта эпě 3 çулта чухнех ларнă. Савăнăçăм ниçта шанăçаймиччě! Пěррехинче тăванăм: «Хěрěм, кам пулас килет-ха санăн?» – тесе ыйтрě. Эпě ăна шывай карапěпе çÿрекен моряк пуласса систертěм. Нумайччен кулчě атте. Эпě питě çÿллě – 190 сантиметр. Шывай карапě çине мана илместчěçех.

Шкул пěтерсен Чулхулари шыв транспорчěсен инженерěсен институтне вěренме кěтěм. 2010 çулта республикăри управление ěçе вырнаçрăм.

**– Сирěн тивěç мěнпе çыхăннă?**

– Пушарта çынсене хăтарас, шывран кăларас ěç, чăннипех те, арçын тивěçě пулсан, манăн – хăрушсăрлăх йěркине пропагандăласси.

Пирěн тěп тěллев – çынсене хамăрăн тата çывăх çынсен пурнăçне хаклама вěрентесси. Хăрушсăрлăх правилисене чи малтанах ачасен пěлмелле. Вěреннине çирěплетме тěрлě конкурспа викторинăсем иртеретпěр.

**– Сирěн лекцисенче пěрре мар пулнă эпě. Итлекенсене хăвăр енне çавăрма пултарнинчен кашнинчех тěлěнетěп. Ача сачěсенчи шăпăрлансем те, лара-тăра пěлменскерсем, сире шăп çеç итлеççě. Вăрттăнлăхě мěнре-ши?**

– Питě ансат. Аудиторие кěрсен кашни итлекене куçпа вулама тытăнатăп. Пурне те калаçăва хутшăнтарма, вěсемшěн кăсăклине çеç каласа кăтартма тăрăшатăп. Пурнăçри тěслěхсемпе паллаштаратăп.

**– Çăлавçă хěрарăма епле йышăнаççě?**

– Тěрлěрен. Шкулта вěрененсем чи малтан манăн çÿллěшрен чăнласах тěлěнеççě. Лекци вулама тытăнсан çак кăмăл-туйăм часах сěвěрěлет.

**– Арçын ěçтешсем йывăр вăхăтра алă пама яланах хатěр пулě?**

– Паллах. ГИМС центрěнче пěр шухăшлă çын нумай, вěсемпе ěçлеме те çăмăл. Кашниех маттур та пултаруллă. Сăмахран, 2011 çулта гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру комитечěн водолазěсем Тутарстанра «Булгария» теплоход путнă вырăнта ěçлерěç. 2013 çулта пěчěк кимěсен инспекцийěн специалисчěсем Хабаровскри ейěве сирме пулăшрěç. Пирěннисем йывăрлăха лекнě çынсене пулăшнă, инкекрисене эвакуациленě, çурт-йěрне çирěплетнě, хăйсен килěнче юлма кăмăл тунисене шывпа апат-çимěç кÿрсе панă, йěрке тунă. Çакăн пек коллективра тăрăшма тÿр килнипе мухтанатăп.

**– Ольга, санăн Ярослава хěр ÿснине пěлетěп. Хěрарăмшăн çемье пурнăçě тěп вырăнта-çке.**

– Ярослава питě ăслă хěрача. Çиччěре çеç пулин те пысăк çын пек шухăшлать вăл. Ěçе васкавлă чěннě чухне: «Анне, ěçе каймалла-и? Атя, эппин, пуçтарăнар», – тет. Пирěн унпа пěр пысăк киленěç – француз чěлхине шěкěлчетпěр. Халě иксěмěр фортепиано калама вěренетпěр-ха тата. Çул çÿреме юрататпăр. Пěлтěр Атлантика океанне куртăмăр. Нумаях пулмасть тата бассейна çÿреме пуçларăмăр.

**– Тавах калаçушăн.**

Людмила ЛУКИНА.

ХАСТАРРИСЕМ

## «Хăвăрт» хушма ятлăскер

(Вěçě. Пуçламăшě 1-мěш стр.).

**«Тăвалла пулсан та – малалла», – çакнашкал тěллевпе пурăнаççě Аслă Елчěксем. Çак тăрăхра «Чăваш хěрарăмě» хаçат вулаканě-юлташě нумай. Çавăнпах пěр çул ятарласах вěсемпе тěл пулма çула тухнăччě. Çакăнти çынсен хастарлăхěнчен, ěçченлěхěнчен, вăр-варлăхěнчен тěлěннěччě ун чухне. Кермен пек пысăк çуртсем хăпартнă вěсем. Пушă вăхăтра ал ěçěпе йăпанаççě. Халě те ку яла кěрсе тухмасăр чун чăтмарě.**

Зайламовсен пÿрт алăкне те тÿрех тупаймарăмăр. Тěплě çынсен хуралтисем те хăтлă. 85 çул тултаракан Мария Деомидовна картишне çын кěнине сисмен те – яланхи пекех çěлет. Хут курупкăна темěн чухлě сумка, алсиш тултарса хума ěлкěрнě хěрарăм. Тěрěссипе, çак япаласем кашнин килтех кирлě.

«Телевизор курнă чухне те ахаль ларас килмест. Лăпкă пурнăç ман валли мар. Эпě пур ěçе те вăр-вар тума хăнăхнă. Çавăнпах «Хăвăрт» хушма ят панă мана ачасем», – тет вăл хăпартланса. Çав вăхăтрах ăшă нуски те, çěçеллě тутăр та çыхать. Урай сарми мěнешкел хитре пулса тухнă. Татăк-кěсěкренех куçа туртакан хатěр ăсталанă ěç майне пěлекенскер. Халě çип те, пусма та кирек хăш лавккара сутаççě. Ывăл-хěрě çитěннě вăхăтра хулăн кěпе çÿтсе нуски çыхни, паллах, нихăçан та манăçмě. Çукран пур тума хăнăхнăскер йывăрлăха парăнман.

Çамрăк чухне Владимир таврашне торф кăлармашкăн илсе кайнă ăна. Çав тăрăхри хěрарăмсене чěнтěр сутса укçа пуçтарнă лара-тăра пěлменскер. Кайран тăван тăрăха пěр чăматан пусмапа таврăннă.

«Темле ěшенсен те пир кěпепе, çÿçе çиветлесе ваййа тухаттăмăр. Пăла пăртан тасалнине пăхмашкăн ушкăнпа чупаттăмăр. Çакă йăлтах ăстăнра çырăнса юлнă», – каласа кăтартать Патреккел хěрě.

Марийăна ěлěкхи йăлапа вăрласа кěртнě. Лашапа мěнешкел хăвăрт илсе çитернě ăна çěнě киле. Уйрăлса тухсан малтан – тăм, унтан йывăç пÿрт лартнă вěсем. Кил тавраш ěмěр тăршшěпех çěнетсе пынă.

Мария Деомидовна ěлěкхи юрă нумай пěлет. Пире те уçă сассипе тыткăнларě. Хăй вăхăтěнче концертпа ăçта кăна çитмен-ши вырăнти артистсем? «Залра ларакансен пит çăмартийě тăрăх куççуль юхса анатчě», – аса илет çаврăнăçуллăскер. Ěлěкхи пурнăçа куç умне кăларсан, паллах, чун хурланать. Юрлаюрла хăмла татнă, кантăр çитěтернě. Халăхпа пěрле канма ларсан та юрă пуçланă. Килте йыш хушăнсан та ěçрен юлман. Ача кÿми тěксе хире васканă хěрарăм. Унта та ыттисемпе танах е, тен, хăвăртрах та ěçленě вăл.

7 тěпренчěкě хăйсен çулне тупнă. Шупашкартан, Тăвайран, Патăрьелтен, Елчěкрен амăшě патне шăнкăравласах тăраççě, тăван килне манмаççě вěсем. Çакăншăн савăнать хěрарăм.

Марина ТУМАЛАНОВА.

ПĚР САМАНТ

# Çěрулми тути асрах

***Эпир, пěччен тăрса юлнă ватăсем, хаçат вулама юрататпăр. Кун пек чухне çумра пурнăç юлташě пур пекех туйăнать. Ача чухнехи самантсенчен пěрне «Чăваш хěрарăмне» юратакансене каласа парас кăмăлăм пур.***

Пирěн, вăрçă вăхăтěнче ÿснě ачасен, аса илмелли темěн чухлех. Пурнăç питě йывăрччě. Çиме çăкăрě те, ытти юр-варě те çитместчě. Аттесěр çемьесем нушитертне тата ытларах тÿснě.

Çуркунне çěрулми лартнă хыççăн çимелěх пачах та юлмарě. Пěр кунхине анне бригадиртан вăкăр çыртарса килчě. Вутăпа çěрулми улăштарма каяс тесе йăлăнсах ыйтнă вăл, анчах ăна яман. Ирěксěрех манăн кайма тиврě.

Анне вăкăр пăхакансем патне пынă çěре урапасене пурне те йышăннă. Пěртен- пěрре, колхозри пысăк айăра кÿлекенни, юлнă. Хěрарăма хěрхенсе вăкăра çак урапана кÿлсе парса янă. Вăл киле çитсен лав çине васкавлăн вутă тиерěмěр те шанчăклăн çыхса хутăмăр. Вара анне мана, вунă çулти ывăлне, ăнăçу сунса çула ăсатрě. Хăй ěçе васкарě.

Пыратăп çапла çулпала, ял хыççăн ял хыçа юлать. Пěринче çума урамра вылякан ачасем çыпçăнчěç.

– Ăçта каян, пěчěк тете, тăвата майракаллă вăкăрпа? – тесе кулаççě. Урапа туртисем çур метр ытла малта тăсăлса пыраççě, çакна асăрханипе çапла каларěç пулас.

Вăхăт вăраххăн шăвать пулсан та хěвел çÿлтен çÿле кармашать. Çанталăк шăрăх. Манăн вăкăрăн та шыв ěçесси килме пуçларě, чěлхипе тутине çуллама тытăнчě. Чиперех пыраттăмăр урампа, Улашка пěр пěчěк пÿрт патěнчи валашкари шыва асăрхарě те айккинелле пăрăнчě. Эпě ăна мěнле чарсан та итлеттереймерěм. Умěнче тăсăлса тăракан турта чÿрече хушшинчи татăк пěренесене пырса тăрăнчě, лешсем туххăмрах пÿртелле кěчěç те ÿкрěç. Çакна курсан хăранипе ман çурăм çине сивě тар тапса тухрě.

Чÿречерен пуçа шалалла чикрěм те пÿртре карчăкпа старик сěтел хушшинче çěрулмипе купăста çисе ларнине курах кайрăм. Вěсем те мана асăрхарěç.

– Ăçта васкатăн? – терě старик апатне чăмланă май.

– Эпě вутăпа çěрулми улăштаракан шыратăп, – терěм сехěрленсе.

– Ачам, чÿречерен мар, хапхаран кěр, – терě нимěн пулман пек. Старик урама тухрě те:

– Вуттуна хамах илетěп, малтан çак чÿрече хушшине иксěмěр майлаштарса хурăпăр, – терě çурăмран лăпкаса.

Çапла эпир ватă çынпа ěçе пикентěмěр. Пěрер сехет пек тăрмашсан ěçе вěçлерěмěр. Карчăкě те тухрě урама, вăл та ăшшăн калаçрě манпа.

– Ачу çук-им? Çěрулми шырама сана кăларса янă-çке, – терě аллине умěнчи пир саппунěпе шăлса.

– Çук çав, вăл Мускав патěнче çапăçура вилнě, – терěм кусран юхакан куççуль тумламěсене пытарма тăрăшса.

Улашка каялла кайнă чухне шывшăн текех ан кастарăр тесе шăвартăмăр. Çěрулми миххисене майлаштарса хунă хыççăн ватăсемпе сыв пуллашса çула тухрăм.

Пыратăп çапла пěр шиксěр. Вăкăр килелле хăех утать, тилхепене унталла-кунталла туртма та кирлě мар. Акă эпě ман çума çыпçăннă ачасен ялне çитрěм. Вěсем çаплах выляççě. Мана курсан шăпăрлансем каллех йěкěлтеме тытăнчěç.

– Хăш ял ачи эсě? Лаву çинче мěскер? Пире кăштах пар-ха, – теççě урапана хыçалтан туртса. Эпě, çаксене çиллenněскер, пушăпа туртса çапрăм. Хăрарěç.

– Атьăр каялла, усал ача ку, – терě ушкăнран пěри. Те çакă, те тепри эпě сисиччен урапа тěнěлě пуçěнчи кустăрма пăтине кăларса илнě. Эпě ăна сисмен те.

Малалла кайнă май лав çине тăсăлса выртрăм та кичемлěхе пусарас тěллевпе хамăра шкулта вěрентнě юрра шăхăрса ěнерлесе пыма тытăнтăм.

Урапа кěмсěрт! турě. Каялла çаврăнса пăхатăп та кустăрма тухса ÿкнě. Хăвăртрах сиксе антăм та ăна илме чупрăм. Йăтма йывăртарах, çавăнпа кустăрмана кустарса лав хыççăн хăвалрăм. Вăкăр вара ăна-кăна уямасăр шав малалла васкать. Хирěç пулакан çынсем:

– Ачам, лаву вăкăрна çăмăл пултăр тесе кустăрмуна хăв кустарса пыратăн-и? – теççě. Хăйсем пěри те пулăшма шухăшламаççě. Ывăннипе кустăрмана пăрахса хăварас патнех çитрěм, анчах аннен ěç кунне катасран хăрарăм. Вăрманçă Васса тете çеç мана шеллерě, кустăрмана тăхăнтартма пулăшрě. Кайран киле чиперех çитрěм, аннепе йăмăк питě хěпěртерěç. Кăçпа вара тÿнě çěрулмие тăраниччен çирěмěр.

Унтанпа нумай çул иртрě, апла пулин те çав çěрулми тути халě те асăмра.

Иван ЕРОФЕЕВ.
Патăрьел районě.



РАШТАВ, 9: КОРРУПЦИПЕ КĔРЕШМЕЛЛИ КУН

# Айăпа кĕтĕн – явап тыт

**Раштав уйăхĕн 9-мĕшĕ коррупципе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун. Шупашкарти Ленин районĕнчи лару-тăрупа РФ СК ЧР СУ Шупашкарти Ленин районĕн следстви уйрăмĕн аслă следователĕ Николай Замуткин паллаштарчĕ. Коррупципе çыхăннă чи кăткăс ĕçсене шăпах вăл уçăмлатать.**

**– Николай, сумлă аслă шкул хыççăн эсир мĕншĕн юрисконсульт е ваккат мар, шăпах следователь ĕçне суйланă?**

– Çак професси, ыттисемпе танлаштарсан, таврари лару-тăрăва витĕм кӳме май пуррине туйма пулăшать. Çынсен кăмăл-туйăмне чухлани те, общество пăхăнакан саккунсене тĕшмĕртни те пур кунта. Шăпах манăн кăмăла тивĕçтерекен ĕç темелле.

**– ÇÇХПИн çул-йĕр патруль службин инспекторĕ тĕлĕшĕпе те эсир ĕçлени паллă. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ши вăл? Уголовлă çак ĕç тавра паян мĕн пулса иртет?**

– Ленин районĕн следстви пайĕпе суд çакна палăртнă: кăçалхи авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарта ÇÇХПИ экс-инспекторĕ ĕçтешĕ административлă майпа йĕркене пăсни пирки протокол çырнă вăхăтра водитель ӳсĕррине сиснĕ. Çакăн пирки тепĕр ĕç пуçарас вырăнне вăл йĕркене пăснин водитель удостоверенине, транспорт хатĕрне регистрациленĕ хутне туртса илнĕ. 30 пин тенкĕ парсан документсене тавăрса парасса, административлă явапран – 1,5–2 çуллăха водитель прависĕр хăварасран, 30 пин тенкĕ штраф тӳлесрен – хăтарасса систернĕ. Анчах та инспектор укçана илеймен. Следовательсемпе ШĔМĕн харпăр хăрушсăрлăх уйрăмĕн ĕçченĕсем ăна алăранах ярса тытнă. Ленин район сучĕ 38 çулти арçын тĕлĕшĕпе приговор йышăннă. Ăна взятка илме хăтланнăшăн айăпланă. Çавна май ăна 1,5 миллион тенкĕ штраф тӳлемелле тунă. Унсăр пуçне вăл патшалăхпа муниципалитет должноçне 2 çул йышăнаймĕ.

**– Сирĕн шухăшăрпа, коррупци сарăлни мĕнпе сăлтавланать, епле аталанать вăл?**

– Коррупци малтан та пулнă. Анчах паян унпа шелсĕррĕн кĕрешмелле. Пасар, услам уçăлни ăна аталанма урăх майсем туса парать. Нимĕн çĕнни те каламастăп: взятка çирĕп контроль çитменнипе, айăплисене явап тыттарманнипе, явапсăрлăхпа çыхăннă. Услам та коррупцие аталанма май парать. Шăпах вăл çак тытăмри преступленисен çăлкуçĕ пулса тăрать те. Чылай чухне саккуна хăйсен пурлăхне патшалăхăннинчен уйăрман влаçри çынсем пăсаççĕ.

**– Вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕнче лару-тăру еплерех?**

– Шел те, коррупци ку тытăмсенчен те пăрăнса иртмен. Ленин район следователĕсем район судне ача садĕсен заведующийĕсене пырса тивекен уголовлă 2 ĕç ярса панă. Вĕсем ĕçе пачах вырнаçман çынсене муниципалитет пĕрлешĕвĕн бюджетĕнчен шалу тӳленĕ. Пĕри, сăмахран, 2011 çултанпах «тирпейлӳçе» ĕç укçине тивĕçтернĕ. Çапла вăл бюджета 282 пинрен кая мар тăкак кӳнĕ. Паян ЧППУн ректорĕн пуканне йышăннăскер тĕлĕшĕпе те уголовлă ĕçе малаллах тишкереççĕ. Ăна хăйне тĕрлĕ сăлтавпа укçа хушса тӳленĕ тесе айăплаççĕ. Пĕтĕмĕшле – 4 500 000 тенкĕ.

Коррупци сывлăх сыхлавĕшĕн те ют мар. Следстви уйрăмĕ Ача-пăча клиника больницин хирургĕ тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтернĕ. Ăна 12 пин тенкĕ взятка илнĕшĕн айăпланă. Ленин район сучĕ тухтăр тĕлĕшĕпе приговор йышăннă: 50 пин тенкĕ тӳлемелле тунă.

Федерацин айăплава пурнăçлакан тытăмĕн ĕçченĕсем те йĕркене пăсаççĕ. Акă юсанмалли 1-мĕш колони ĕçченĕ тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе те тишкерсе тухнă. Ăна кирпĕч шутлакан çынсенчен пĕринчен колони территорине илсе кĕме юраман япаласене курмăш пулассишĕн взятка илнĕ тесе айăпланă. Суд йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, пĕтĕмĕшле режимлă колонире 1 çул та 6 уйăх ирттерме тивĕ унăн.

**– Калаçушăн тавах.**

**Инна ЕГОРОВА,**
**Шупашкарти Ленин районĕн следстви уйрăмĕн следователĕн пулăшуçи.**

# Пурлăха та арестлеме тивет

**ПНОн Коррупцие хирĕç конвенцине Раççей Федерацийĕ 2003 çулта шăпах раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче алă пуснă. Паянхи куна коррупципе кĕрешме 172 патшалăх килĕшнĕ.**

РФ Следстви комитечĕн ЧР управленийĕн Шупашкарти Мускав районĕн следстви уйрăмĕ асăннă кун тĕлне ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ.

Кăçалхи 11 уйăхра хулари Мускав районĕнчи следстви уйрăмне коррупципе çыхăннă 17 хыпар çитнĕ. 11-шĕ тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарнă. Суда 7 ĕç ярса панă. 3 ĕç взятка илнипе çыхăннă.

Кăçал пуçарнă уголовлă ĕçсем патшалăхпа обществăна 274 пин тенкĕлĕх тăкак кӳни палăрнă. Следовательсем тăрăшнипе 26 пин тенкине каялла тавăрма май килнĕ. Ку тĕлĕшпе айăпланаканăн пурлăхне арестлес мелпе анлă усă курнă. Çулталăк пуçланнăранпа Шупашкарти Мускав районĕн следователĕсем 250 пин тенкĕлĕх пурлăх арестленĕ.

Коррупципе çыхăннă преступленисем тунăшăн, ытти çулхи пекех, кăçал та суд тенкелĕ çине право хуралĕн органĕсенче ĕçлекен должноçри çынсем ларнă. Тĕслĕхрен, кăçал кăна Суд приставĕсен федераци службинче ĕçлекен икĕ çынна айăпланă. Следовательсем граждансем суд йышăнăвĕпе парăма шырама пынă приставсене взятка панă тĕслĕхсене тăрă шыв çине кăларнă.

Сăмахран, Шупашкарти Мускав район сучĕ парăмри 35 çулти арçынна взятка панăшăн айăпланă. 2 миллион тенкĕ штраф тӳлемелле тунă. Районти следстви пайĕпе суд çакна та палăртнă: саккуна пăснă арçын 50 пин тенкĕ укçана суд приставне кăçалхи çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче панă, çапла майпа арестленĕ автомашинине тавăрса парасса шаннă. Арçын парăмĕ 146 пин тенкĕ ытла пулнă, «Лада приорăна» çавăнпах арестленĕ. Анчах ăна суд приставĕсемпе ШĔМĕн коррупцие хирĕç ĕçлекен пайĕн сотрудникĕсем шухăшланине пурнăçа кĕртме паман, алăран ярса тытнă.

РФ СК ЧР Управленийĕн Шупашкарти Мускав районĕн следстви уйрăмĕ право хуралĕн ытти органĕсемпе коррупцие хирĕç кĕрешес, саккуна пăснисене уголовлă майпа айăплас тĕлĕшпе малалла та тĕллевлĕ ĕçлет.

**Н.ПЕТРОВА,**
**Шупашкарти Мускав районĕн следстви уйрăмĕн следователĕн пулăшуçи.**



АЙĂПЛАВ

# Хăнара çывăрнăшăн

**Тăвай районĕн миравай судйи 54 çулти Н.Васильев тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă. Арçынна ют çурта хуçи ирĕк памасăр кĕнĕшĕн айăплаççĕ.**

Следствипе суд Васильев çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче ӳсĕрле малтанхи арăмĕн çуртне кĕрсе верандăра çывăрма выртнă тесе палăртнă. Арăмĕ пулнăскер ăна хăйĕн çуртне кĕме чарнине, унпа калаçма кăмăл туманнине лайăх чухланă вăл. Çавăн пекех арçын хĕрарăм çĕр каçма куллен ватă амăшĕ патне кайнине те пĕлнĕ. Хĕрарăм каçпа туха кайсан сивĕтмĕшри апатпа хăналаннă вăл, кун хыççăн каллех çывăрма кĕрсе выртнă.

Ирхине 7 сехет тĕлĕнче вăрансан хĕрарăм килне таврăнма ĕлкĕрейменнине тавçăрнă арçын. Алăка тул енчен çăрапа питĕрнĕ-çке. Вăйпа уçма хăтланнă – пултарайман. Кун хыççăн урама чӳрече рамине илсе тухнă. Кăштахран каялла кĕресшĕн пулнă, анчах мухмăрлăскер чӳречерен хăпарайман. Нумай шухăшласа тăмасăр пĕчĕк пӳрт алăкĕ çинчи çăраççине çĕмĕрнĕ те унта çывăрма кĕрсе выртнă.

Килне таврăнсан хĕрарăм ун патĕнче такам хăналаннине асăрханă – сĕтел çинче тĕпренчĕксем выртнă, таса мар савăт-сапа ларнă. Пӳрт-çуртне пăхса çаврăннă. Çывăракан упăшкине хăваласа кăларса янă.

Анчах кунпа кăна çырлахман арçын. Тепĕр кунхине, çурлан 18-мĕшĕнче, каллех «хăнана» килнĕ. Анчах хальхинче хĕрарăм килĕнчех пулнă, кĕртмен. Вăл вара çăраççине çĕмĕрсе каллех пĕчĕк пӳртре çĕр каçнă.

Васильев хăй çапла хăтланнине ӳсĕр пулнипе сăлтавланă. Килне утса çитме вăй-халĕ пулманран арăмĕ патне кĕнине çирĕплетнĕ. Следстви пынă вăхăтра вăл арăмĕ пулнăскерĕн çуртне пĕчĕн мар, кил хуçипе кĕнине ĕнентерме тăрăшнă.

Ĕçе тĕплĕ тишкернĕ, свидетельсемпе курса калаçнă хыççăн арçын час-часах ĕçни, малтанхи арăмĕн çуртне саккунсăр кĕни, çăрасем çĕмĕрни, çапăçни паллă пулнă. Çавăнпах суд ăна айăплă тесе йышăннă. Çавна май унăн 250 сехет ĕçлесе юсанмалла – ял тăрăхне тасатмалла, тирпейлемелле, илем кӳмелле – пулĕ.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай район прокурорĕ.**

ЫЙТУ-ХУРАВ

# Информаципе саккунсăр усă курмалла мар

**Атте «Легко займ» мелĕпе кивçен илнĕ. Хампа канашламасăрах хутсем çинче манăн телефон номерне те кăтартнă. Атте укçана вăхăтра тавăрайман курăнать. Халĕ мана кашни 15 минутра автоответчик шăнкăравласа парăм пуррине пĕлтерет. Аттепе пĕрле тахçанах пурăнмастпăр, унăн урăх çемье. Мĕн тумалла-ши манăн?**

**Денис З.**

Федерацин 2006 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнче йышăннă «Гражданина палласа илмелли информаци çинчен» калакан саккунĕн 14-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, палласа илмелли информаци субъекчĕ (ку тĕслĕхре эсир) оператортан (ку тĕслĕхре банк) хăйĕн палласа илмелли информацийĕ тĕрĕс мар, саккунсăр тупнă е, пачах кирлĕ мар тăк, хуратма çирĕплĕнех ыйтма пултарать.

Эппин, эсир çак саккунпа килĕшӳллĕн, асăннă организацие тӳррĕмĕн кайса ыйту çырма пултаратăр.

Гражданина палласа илмелли информаци субъекчĕ оператор унăн паллисемпе саккуна пăсса усă курать е унăн правине урăх майпа пăсать тесе шухăшлать пулсан, çӳлерех асăннă саккунăн 17-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, палласа илмелли информацие упракан правăна хӳтĕлекен органа оператор тĕлĕшпе çăхав çырма пултарать. Асăннă тĕслĕхре право хуралĕн органĕ – Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен федераци службин Чăваш Енри управленийĕ. Вăл Шупашкарти Гладков урамĕнчи 7 «Б» çуртра вырнаçнă. Е суда та кайма юрать.

Асăннă статьян 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн, гражданина палласа илмелли информаци субъекчĕ хăйĕн прависене хӳтĕлеме çеç мар, вĕсене пăссан суд урлă тăкака саплаштарма, кăмăлтуйăм сиенне шыраса илме те пултарать.

**Э.СТОЛЯРОВА,**
**Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн заместителĕ.**



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Чăх какайĕпе кăмпа салачĕ



**Пĕçернĕ 5 çăмарта, тĕтĕмленĕ 200 грамм чăх какайĕ, маринадланă 200 грамм кăмпа, 100 грамм сыр, укроп, майонез кирлĕ.**

Çăмарта шуррипе саррине /уйăрса/ тата сыра теркăламалла. Какайпа кăмпана вĕттĕн турамалла. Салата сийлесе /какай – кăмпа – çăмарта шурри – сыр/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Çиелтен çăмарта сарри хумалла. Салата вĕтетнĕ укроппа илемлетмелле.

### Апельсин пудингĕ

**1/3 стакан çăнăх, 3 çăмарта, 2 апельсин, 3/4 стакан сахăр, 80 грамм услам çу, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 1/4 стакан сĕт, сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Апельсин хуппине теркăламалла, сĕткенне пăчăртаса кăлармалла. Услам çăва, сахăра, апельсин хуппине, çăмарта саррине миксерпа пăтратмалла, çăнăхпа апат соди хушмалла, сĕткенпе сĕт, пăтратса кăпăклантарнă çăмарта шурри ямалла. Чустана çу сĕрнĕ çатмана куçармалла. Пудинга 50-55 минут пĕçермелле. Çулăма сÿнтерсен сахăр çăнăхĕ сапмалла.

### Килти карамель

**1/2 литр сĕт, 3 стакан сахăр, 1 стакан типĕ сĕт, 100 грамм услам çу кирлĕ.**

Сĕтпе сахăра пăтратмалла. Çак хутăша вăйсăр çулăм çине лартмалла, хăмăрланма пуçличчен пĕçермелле. Унтан тин услам çу хушмалла. Карамель хатĕрлеме вăтамран 1,5 сехет кирлĕ.

### Сыр яшки

**400-500 грамм чăх какайĕ, шăратнă 200 грамм сыр, 400 грамм çĕрулми, 150 грамм сухан, 180 грамм кишĕр, услам çу, тăвар, пăрăç, укроп, лавр çулçи кирлĕ.**

3 литрлă кастрюле шывпа какай ямалла, вĕреме кĕрсен тăвар хушмалла. 20 минут пĕçерсен какая кăлармалла.

Суханпа çĕрулмие, какая тăваткалласа турамалла. Кишĕре, сыра теркăламалла.

Вĕрекен бульона çĕрулми ямалла. Кишĕре, сухана ăшаласа яшкана хушмалла. Какай ярсан 3-4 минут пĕçермелле. Сыр хушсан лайăх пăтратса çулăма сÿнтермелле. Сĕтел çине лартиччен вĕтетнĕ укроп сапмалла.

### Тăпăрч кукăлĕ

**400 грамм çăнăх, 250 грамм услам çу, 500 грамм тăпăрч, 1 апат кашăкĕ какао çăнăхĕ, 4 çăмарта, 350 грамм сахăр, 3 апат кашăкĕ крахмал, 100 грамм хăйма кирлĕ.**

Теркăланă услам çăва 150 грамм сахăрпа, какаопа, çăнăхпа пăтратмалла. Чустан çур пайне çатмана ямалла.

Тăпăрча, сахăра, çăмартана, хăймана миксерпа пăтратмалла, юлашкинчен крахмал хушмалла. Çак хутăша çатмана сармалла. Çиелтен юлнă чустапа витмелле. Кукăле духовкăра 45 минут пĕçермелле.

### Какай кукăлĕ

**2 çăмарта, 0,5 чей кашăкĕ тăвар, 1 стакан çăнăх, 1 стакан турăх, 1 чей кашăкĕ апат соди кирлĕ.**

**Ăшне хума 300 грамм какай фаршĕ, пуçлă 2 сухан, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Турăха апат содипе пăтратмалла. 5 минутран çăмарта, çăнăх, тăвар хушмалла. Чустан çур пайне çатмана ямалла. Ун çине вĕтетнĕ суханпа фарш хутăшĕ хумалла. Юлнă чустапа витмелле. Кукăле духовкăна 40 минутлăха лартмалла.

### Макаронпа фарш хăпартăвĕ

**200 грамм какай фаршĕ, пĕçернĕ 200 грамм макарон, пуçлă 1 сухан, 1 помидор, 3 çăмарта, 3 апат кашăкĕ майонез, сыр, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Тăвар, пăрăç сапнă фарша макаронпа пăтратмалла. Хутăша микрохумлă кăмакана лартмалли савăта ямалла. Ун çине çурма çаврашкан каснă суханпа помидор хумалла. Хăпартăва çăмартапа майонез хутăшĕпе витмелле. Çиеле сыр теркăламалла. Хăпартăва микрохумлă кăмакара 15 минут пĕçермелле.

### Пылак кăлпасси

**500 грамм куккурус патакĕ, 300 грамм ирис, 150-шар грамм шĕвĕ хăймапа какао, 200-шер грамм исĕм, аçтăрхан мăйăрĕ, услам çу кирлĕ.**

Ирĕлтернĕ ириса услам çупа, шĕвĕ хăймапа пăтратмалла, куккурус патакĕ, шÿтернĕ исĕм, вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕ, какао хушмалла. Çак хутăша çатăрка çине хурса кăлпасси майлă çавăрмалла, 2 сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла.

## СЫВЛĂХ

# Сухан хуппи те усăллă



**Сухан хуппи шывне ÿслĕкрен, вар-хырăмпа аптăрасан ĕçеççĕ. Вăл шăк хăвалама та, юн тымарĕсене çирĕплетме те пулăшать, микробсене вĕлерет, витаминпа та пуян.**

**Пыр пĕрмаях шыçать-и?** Сухан хуппи шывĕпе чÿхемелле.

**Сунас** аптратсан 1 стакан вĕрекен шыва 4 апат кашăкĕ вĕтетнĕ сухан хуппи ямалла та унăн пăсĕпе 3-5 минут сывламалла.

**Ÿслĕкрен.** 2 апат кашăкĕ сухан хуппине 2 стакан шыва ярса 15 минут вĕретмелле. Сăрăхтармалла та апат умĕн çур сехет маларах ăшăлла 1/4 стакан кунне 3 хутчен ĕçмелле.

**Шăк хăмпипе пÿре ыратсан.** 3 апат кашăкĕ вĕтетнĕ хуппа 2 стакан вĕри шыва ярса çур сехет лартмалла. Цистит вăйлах аптратсан кунне икĕ хутчен 50-шар миллилитр 3–5 кун ĕçмелле. Вăраха кайнă чире сиплеме сухан шывĕпе кунне 3-4 хутчен 2-шер апат кашăкĕ 10 кун таран усă курмалла.

**Юн тымарĕсем ыратсан** 2 апат кашăкĕ сухан хуппине 100 миллилитр эрехе ярса 7 кун лартмалла. Сăрăхтармалла та апат умĕн çур сехет маларах кунне 3 хутчен 20-шер тумлам ĕçмелле. Е 2 апат кашăкĕ хуппа 400 миллилитр вĕри шыва ярса 6 сехет лартмалла та кунне 3 хутчен апат умĕн çур сехет маларах 1/4 стакан ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 7-10 кун. Эрне тăхтав тунă хыççăн тепĕр хутчен ĕçмелле.

# Ÿслĕк аптратсан

**Купăста çулçине** вĕри шывра пиçĕхтермелле, унтан ун çине пылпа тăвар /1:1/ хутăшĕ сĕрмелле те кăкăр е çурăм çине хумалла /анчах чĕре тĕлне мар/. Полиэтилен çатăркапа витсе çыхмалла. Пĕр хушăран çулçа илсе пăрахма та юрать.

Шывра е духовкăра пĕçернĕ **груша** ÿслĕке ирттерме пулăшать. Типĕтнĕ груша компочĕ кĕлетке температури хăпарсан ăш хыпнине ирттерет. 1 стакан типĕ çимĕçе çур литр шыва ярса 20 минут вĕретмелле, чĕркесе 4 сехет лартмалла. Апат умĕн çур сехет маларах ăшăлла ĕçмелле.

2 **банана** тураса 200 миллилитр шыва ямалла, 10 минут вĕретмелле. Сăрăхтарса пыл хушмалла. Ăшăлла ĕçмелле.

**Финик** 10 çырлине çур литр шыва ярса 30 минут вĕретмелле. Типĕ ÿслĕк аптратсан ĕçмелле ку тутлă шыва. 6-7 çырлана 200 миллилитр сĕтре пĕçерме те юрать.

30 грамм **исĕм çырлине** вĕресе сивĕннĕ шывра 45 минут ислетмелле. Çырлана çывăрма выртас умĕн ăшă сĕтпе сыпса çимелле.

Ачасене çакăн пек хутăш та пулăшмалла: пĕр пек виçепе 1 **панулми**, 1 **сухан**, 1 **кишĕр** /вĕтĕ терка/ витĕр кăлармалла. Унта 2 апат кашăкĕ пыл ярса пăтратмалла. Ачасене хутăша ăшăлла кунне 4-5 хутчен 1-ер чей кашăкĕ ĕçтермелле.

2 апат кашăкĕ теркăланă **панулмие,** 2 апат кашăкĕ **пыла,** 1 апат кашăкĕ теркăланă **сухана** хутăштармалла та ăшăлла кунне 4-7 хутчен 1-ер чей кашăкĕ ĕçмелле.

«Çунтаракан» сĕт. Тăваткалласа туранă 10 пуç **сухана,** вĕтетнĕ 1 пуç ыхрана çур литр **сĕте** ярса çемçеличчен пĕçермелле. Сĕте **пĕтнĕк курăкĕпе çăка пылĕ** хушса 1 сехет лартмалла. Кунне темиçе хутчен 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле.

*Халăх мелĕсемпе сиплеме пуçличчен тухтăрпа канашламалла.*

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Ĕне пăрулаттарасси тавра

Çамрăк чĕрчун сывлăхĕ, сĕт пахалăхĕпе виçи ĕнене пăрулаттаричченех епле пăхнинчен нумай килет. Выльăх канма ĕлкĕртĕр тесен ăна вăхăтра сума пăрахмалла.

Пăруличчен 60-70 кун маларах выльăха типĕ апат çине куçармалла. Кун пек вăл витаминпа минералсен шайне йĕркене кĕртме ĕлкĕрĕ. Ку вăхăтра ĕнене тымар çимĕç, силос, комбикорм памаççĕ, утă çитереççĕ. Шыв виçине те чакармалла, ытлашши сивĕ те ан пултăр вăл. Пăрулама хатĕрленекен выльăха апат та ытлашши памалла мар – самăрланасран сыхланмалла.

Ĕне выртакан вырăн йĕпе, шывлă пулмалла мар. Сивĕ урайĕнче шăнса чирлесрен сыхланмалла. Усă сывлăша кăлармаллине те манмалла мар.

Ĕне вăтамран 285 кунран пăрулать. Пĕр-икĕ эрне малтан хырăмĕ аяла усăнать, кучĕ хĕрелет, çилли тулать. Пăрулас умĕн мăнтăр сĕнтĕр ярать вăл, купарча шăммисем те сарăлаççĕ.

Ĕнене пăрулаттарма хатĕрленекен вите таса пулмалла. Айне те урăх улăм сарса çĕнетмелле. Пăрулачă чухне ĕне е выртать, е тăрать. Тĕрĕссипе, малтан пăрăвăн малти урипе пуçĕ тухмалла, анчах тепĕр чухне кайри урисемпе те килет вăл. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулсан ĕне çур сехетрен ытла пăрулавасть. Енчен те çак вăхăтра пăру тухмарĕ пулсан, эппин, вăл таçта хĕсĕннĕ, çавăнпах ăна тухма пулăшмалла.

Пăру тухса ÿкнĕ-ÿкмен ăна сывлаттармалла, çавăнпах çăварĕ, сăмси, куçĕ çинчи йăлмакана шăлса тасатмалла. Кăвапине хырăмĕнчен 10-12 сантиметр аяларах касса юнран тасатмалла, йод сĕрмелле.

Ĕнене вара кăштах кантармалла. Айĕнчи улăма тепĕр хутчен улăштарсан та пăсăк мар. Кучĕпе çиллине ăшă шывпа çуса типĕтсен аван.

Тепĕр чухне пăрулачă хыççăн ĕне чирлет. Çавăнпах май пур тăк выльăха ветеринара кăтартмалла, уйрăмах йывăррăн пăруларĕ пулсан.

Чирсенчен пĕри ĕне хысне пăрахманнипе çыхăннă. Вăл талăкĕпех ÿкмесен выльăха пулăшма васкамалла. Унсăрăн часах хыçĕ çĕрме тытăнать, çавна пулах ырă мар шăршă сарăлать. Унран та ытла, микробсем выльăх организмне лекнĕрен вилме те пултарать.

Тепĕр амак – парез. Кун пек чухне çăмăлланнă хыççăн выльăх выртать кăна. Чир çăмăллăн иртнĕ чухне ĕне ура çине тăрать-ха, анчах хăйне япăх туять. Анчах тепĕр чух шалкăм çапма та пултарать. Тĕрĕссипе, çак чир пăруличченех палăрать – ĕне вăйсăрланать. Çакă выльăха тĕрĕс мар апатлантарнипе, пăхманнипе çыхăннă.

Гипокальцеми те – тин пăруланă ĕнесен чирĕ. Вăл выльăх апат нумай çинипе, сахал хускалнипе çыхăннă. Ÿт ытлашшипех хушнă ĕне организмĕнче Д витамин çителĕксĕр пулнăран юнĕнче фосфорпа кальци виçи чакать.

Пăрăва сывлаттарсан ĕне çумне хумалла. Амăшĕ ăна чĕлхипе çуласа тасатĕ, çавна май юн чупасăхĕ лайăхланĕ.

Малтанхи кунсенче пăрăва ăшă витере усрамалла. Амăшĕн сĕчĕ пĕрремĕш талăкрах пăру иммунитетне çирĕплетме май парĕ. Çавăнпах пĕчĕкскерне тÿрех 1 литр сĕт ĕçтермелле. Витамин çителĕклĕ пултăр тесен сĕте пурăпа тăвар хушмалла. 16 кунран ăна çемçе симĕс утă хурса пама тытăнмалла.

Пăруланă ĕнене вара малтан ăшă шыв ĕçтермелле. Сехетрен сĕтне суса илме те юрать. Малтанхи кун ăна çемçе утă çеç памалла. Иккĕмĕш кунхине пĕçернĕ çăнăх шывĕ сĕнме юрать. Хăнăхнă апат патне 20-30 кунран çеç таврăнмалла.

Ĕне сĕт лайăх антартăр тесен выльăх апатланăвне тĕрĕс йĕркелемелле. Çурхи тĕш-тырă улăмĕ, утă, кукурус силосĕ, кăшман, çĕрулми, кавăн, çăнăх, жмых çитермелле.







ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Юттине хапсăнтăм

Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Аптранă енне юратнă хаçата çырса пăхас терĕм. Тен, вулакансен хушшинче мана ырă канаш паракан тупăнмĕ-и тетĕп. Сĕнӳ памасан та чуна усăп хăть. Йывăрлансах çитрĕ вĕт. Кун пек чухне вара туйăмсем пирки кама та пулин каласа кăтартмаллах. Кӳршĕ-арша та, тусăмсене те калаймастăп кун пирки. Намăс.

Таньăпа тахçанах туслă эпир. Вăл пирĕн яла качча килсен паллашрăмăр та унтанпа уйрăлман. Тĕрĕссипе Таньăн мăшăрĕпе Славикпе те яланах хутшăннă эпĕ. Çавăнпах çемьесемпе те туслă пурăнтăмăр.

Çемье тенĕрен, те пулнă ĕнтĕ вăл манăн? Гражданла пурăннă арçынна упăшка темеллех-ши? Вăл та урăх арăм тупнăранпа висĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Çавăнтанпах пĕччен эпĕ. Ача çуратма та май килмерĕ. Таньăпа Славик вара ывăлне кун çути парнелерĕç. Иккĕмĕш класа çӳрет вăл. Анчах вĕсен çемйи пирки те çирĕп те туслă теме çук. Ачи умĕнче хăйсене сăпайлă тытаççĕ-ха аслисем, пĕр-пĕринчен вара тахçанах сивĕннĕ. Тахăшĕ айăплă куншăн – мур пĕлет. Иккĕшĕ те пулĕ. Славик те чупкăн, майра тесен тăста çитме хатĕр. Пĕрер черкке ĕçсен – пушшех. Таня та арçынсене куç хĕсме ӳркенмест. Пĕр-пĕрин умĕнче парăмра çӳременнине туйсах мăртăхмаççĕ те арăмĕпе упăшки. Уйрăласси пирки калаçнине илтмен те, айккине чупма пĕри те хирĕç мар. Вăрттăн паллах.

Таньăн çывăх тусĕ пулнă май, унăн еркĕнĕсем пирки пĕлсе тăратăп. Хăшĕ-пĕринпе пĕр сĕтел хушшине ларса курма та пӳрнĕ.

Иртнинче вара Мишăпа паллаштарчĕ тусăм. Ун пирки час-часах каласа кăтартать Таня. Систермест пулин те ăна савнине чухлатăп.

Ăнсăртран лавккара тĕл пултăмăр ăна. Тусăмпа шăпах çĕнĕ кĕпе туянма кĕнĕччĕ. Арçын та шăлавар шыратчĕ. Миша ман çине пăхнине туймарăм мар. Чиперскерне куç хĕррипе хам та сăнарăм. Ăмсанса та пăхрăм. Çакна Таня та асăрханă. Кĕвĕçенçи те пулчĕ тусăм. Юттине хапсăнма юраманнине те асăрхаттарчĕ. Кун пирки хам та ăнланатăп-ха. Пушшех те: тусăн савнине епле çавăрăн? Анчах...

Палламан абонент шăнкăравларĕ каçхине. Ăçтан, камран – пĕлместĕп, çапах ман номере шыраса тупнă Миша. Усăлма чĕнчĕ. Юраманнине пĕлсех килĕшрĕм. Пĕрре çеç пулсан юрĕччĕ-ха. Час-часах курнăçатпăр-çке халĕ. Таня кун пирки, паллах, нимĕн те пĕлмест. Савнă еркĕнĕ сивĕннине чунран хурланса каласа кăтартать. Ара, иксĕмĕр тĕл пулма пуçланăранпа Таня валли вăхăт пачах уйăрмасть-çке Миша. Эпĕ тусăма итлетĕп те лăплантарма тăрăшатăп. Унпа сывпуллашсанах арçын ытамне тухса вăркăнатăп. Хама кун пек телейлĕ тахçантанпах туйман эпĕ. Миша та çавнах калать. Тусăма улталанине шута илмесен – пĕтĕмпех йĕркеллĕ пек.

Капла хăтланма юраманнине иксĕмĕр те аван чухлатпăр, анчах тусăма кун пирки епле каламаллине пĕлместпĕр. Юратас та килет, юлташăма та кӳрентерес килмест. Мĕн тумалла-ши?

**ВАЛЕНТИНА.**

АХ, АНЧАХ

# Сăнӳкерчĕкри телей

«Эх, кам-ши вăл, ман шăпам? Аппан куçĕ вăн епле телейпе тулнă. Кам мана çавăн чухлĕ ăшăлăх парнелĕ?» – кивĕ сăнӳкерчĕкрен савăнăçпа çиçсе тинкерекен икĕ мăшăр куç ирĕксĕрех çакнашкал шухăшсем çурататчĕç. – Акă мĕнле иккен вăл телей тени». Анчах сăнӳкерчĕкре – телей, пурнăçра вара...

«Çак хĕрарăма качча илмеллеччĕ-иха манăн? Çакна курма çуратнă-ши вара мана?» – ятлаçа-ятлаçа арăмне кил еннелле туртать Вова. Ӳсĕр хĕрарăм упăшкинчен вĕçерĕнесшĕн тапаçланать, пылчăк-и, пылчăк мар-и – лач-лач таплаттарать ял тăрăх вăл. Çакнашкал ӳкерчĕк çивĕч чĕлхеллисене те тахçанах кăсăклантармасть ĕнтĕ. Альбинăн ӳсĕр сассине кашниех уйăрса илет. Вова ял халăхĕ умĕнче аванмарланать, анчах та ывăлĕн амăшне улшăнма хистеймест. Ним тăвайман енне хăш-пĕр чухне хăй те пĕр-икĕ черкке çавăрса хурать вара.

Кӳршисем умĕнче намăсланнăран хулари хваттерне сутса çуралнă тăрăха куçрĕ çемье. Ял хĕрринче пурăнакансен килĕнче мĕн пулса иртнине никамах та курмасть терĕ пулас арçын. Çук, Альбина кĕске вăхăтрах пĕлтерчĕ хăй пирки. Хăй тăрăшнипе хăтлăх кĕртнĕ çуртне таврăнасшăн та мар арçын. Темиçе уйăхлăха шапашкăна тухса каять вара. Ывăлĕ пулас мар тăк ĕни те кĕтĕве каяймасăр картишĕнче тăрса юлĕччĕ.

Çамрăк чухнехи харсăрлăхĕ пурăна киле, ерех витĕмĕпе-тĕр, усаллăха çаврăнма пултарасса кам пĕлнĕ? Ун чухне Вова 18 çулти пикен арçынла хăтланăвĕсене шăпи йывăр килнипе тӳрре кăларчĕ. Альбинăн тăлăхсен çуртĕнче çитĕнме тивнĕ. Çавăнта лекнĕшĕн чи малтанах амăшне вăрçрĕ хĕр. Пурнăç панă çыннине «симĕс çĕлен» витĕмĕнчен хăтăлма вăй-хăват çитерейменшĕн аслăрах классенче курайми те пулнă вăл.

Ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхне туйса курманскере аслисем ачисене алăран çавăтса утни те вĕчĕрхентеретчĕ. Çав самантра ăна ăнсăртран кăшт сĕртĕнсенех шăрчĕ тăрса каятчĕ унăн.

Интернат хыççăн строительство училищине алăран тытса тенĕ пек илсе кайрĕ ушкăн ертӳçи Альбинăна. Кунта та харсăрлăхĕпе палăрчĕ вăл. Çапах штукатур-маляр ĕçне алла илчĕ.

Училищĕре сывпуллашнă каç хĕрĕн пурнăç кустăрмине пач кĕтмен еннелле пăрса ячĕ. Хĕр тантăшĕсем савнийĕсемпе Шупашкар тăрăх усăлса çӳреме кăмăл турĕç. Альбина вара общежити еннелле каякан юлашки троллейбуса чупса çитсе вырнаçрĕ.

Хулан пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитиччен пике тĕлĕрсе те кайрĕ. Ун çумне ӳсĕр каччă пырса ларнине те сисмен. Çĕрĕк сухан шăрши сăмсана пырса çапсан Альбина куçне чалт уçса ячĕ. Каччă çып-çывăхах иккен, ыталасшăн кармашать тата. Çавăнтах ыйхи вĕçсе кайрĕ пикен. Пĕтĕм вăйран тĕксе ячĕ хайхискерне Альбина. Лач! кайса ларчĕ лешĕ. Тарăхса кайнăскер хĕре çӳçĕнчен лăскама тытăнчĕ.



Водитель хушша-хуппа кĕмен-тĕк мĕнпе вĕçленĕччĕ харкашу – паллă мар. Альбина кĕсйинчен хуçлатмалли çĕççе те кăларма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Ӳсĕрскер лăпланма-и унта, çакна курсан пушшех хĕрсе кайрĕ кăна. Хĕр хутне кĕнĕ водителе пăвма пуçласан Альбина текех чăтса тăраймарĕ, йĕкскĕке çĕççипе пĕççинчен чашлаттарчĕ...

«Васкавлă пулăшу» часах çитрĕ, вĕсемпе пĕрлех – йĕрке хуралçисем те. Пурне те милици участокне илсе кайрĕç. Хӳтĕлемме тивнине ĕнентерме пултарчĕç Альбинăпа водитель, çĕрлех киле ячĕç вĕсене.

Çапла паллашрĕç вĕсем – Вовăпа Альбина. Çав каç йĕкĕт хĕре общежитие çитиех ăсатса ячĕ. Тепĕр кун Вова яланхи пекех руль умне ларчĕ, анчах та инçех те каяймарĕ – милици машини çула пӳлчĕ. Çĕрлехи пăтăрмаха усăмлатиччен тесе ăна рейсранах лартса кайрĕç.

Малашне мĕн пуласса шухăшлама та пултарайман Вова. Суд... Ĕçлесе юсанмалли колони...

Çуралнă тăрăхĕнче Вовăна шыракан та çук. Ватă кукамăшне пăхакан çукран ваттисен çуртне вырнаçтарнă. Пĕлĕшсем кам – çарта, кам – заводра. Ахаль те хутрансистрен çеç тĕл пулаканскерсен иккĕленӳ те çуралман.

Оля çеç канăçне çухатнă. Çыру хыççăн çыру шăрçаларĕ вăл. Анчах хурав пулмарĕ. Унччен пушă вăхăт тупăнсанах Вова хĕр патне çыру çыраканччĕ. Ольăран хурав иличченех хăйĕн туйăмĕсем пирки тепĕр çыру та хатĕрччĕ унăн. Халĕ вара 1...2...3 уйăх та иртсе кайнă ĕнтĕ – анчах халĕ те пĕр сас-хура та çук унран. Тĕрлĕ шухăш явăнчĕ пике пуçĕнче. Тĕрлĕ сăлтавпа тӳрре кăларма тăрăшрĕ хĕр каччăна: чирленĕ-ши е ĕçĕ нумай-ши ĕнтĕ...

Хăйĕн вара юлашки тĕл пулăвне аса илсе ирсерен те, çывăрма выртсан та куçĕ шывланчĕ...

Лайăх паллăсемпе кăна вĕренекен Оля Хусанти пĕр института вĕренме кĕрсен хăйне чи телейлĕ çын пек туйрĕ. Тăван Шупашкартан инçетре пурăнасси те хăратмарĕ ăна. Ют çĕрте савнийĕнчен инçетре пулни кăна кăмăлне хуçрĕ. Хытах тунсăхланине Вова та пытармарĕ.

Анчах тĕл пулсанах Ольăн куçĕ шывланчĕ. Юратнă çыннин ытамĕнче те чунĕ вăркарĕ хĕрĕн. Сывпуллашас самант хăратрĕ ăна. Çак кунран пуçласа унăн Вовăпа пурнăç çулĕпе алăран тытăнса утас килчĕ. Анчах сăпайлă пике шухăшĕсене хăйĕнче тытрĕ...

Чĕрĕк ĕмĕр тултарнă сăнӳкерчĕк çав тĕлпулури пекех тăварлă тумламсем кăларать: «Мĕншĕн ун чухне алăран тытсах пĕрле илсе каймарăм-ши ăна? Водительсем пур çĕрте те кирлĕ. Хусанта та ĕçе вырнаçтарчĕ вăл. Пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлекенскер çĕнĕ çĕре часах хăнăхĕччĕ».

Часах каяймарĕ Оля кукамăшĕ патне. Хĕллехи каникул пуçлансан тин ачалăхне тата çамрăклăхне иртернĕ тăрăхалла çитме май пулчĕ унăн. Стипендийĕпе, пĕр пус юлмиччен, парне илсе тултарчĕ. Вова валли çыхнă перчеткене те хитре чĕркеме хучĕ. Ташă каçне чăтăмсăрран кĕтрĕ Оля, чĕри, Вовăна курассишĕн, кăлт-кăлт тапрĕ. «Чи малтанах мĕн çинчен ыйтас-ши?» – шухăшсемпе пырса кĕчĕ вăл клуба. Анчах ниçта та асăрхамарĕ Вовăна.

«Савнине кĕтетĕн пулĕ-ха? – сăмах тапратрĕ Вова кӳрши. – Мана ан кӳрен те çак хыпаршăн – Вова авланнă та Çурçĕре куçса кайнă теççĕ ялта». Ку сăмахсем хыççăн чупсах тухрĕ клубран Оля, ыттисене куççульне кăтартасшăн пулмарĕ.

«Эсĕ тĕрмере пулнине пĕлнĕ тĕк шыраса тупăттăм сана, кĕтсе илĕттĕм – халĕ те эсĕ-çке чун-чĕремре», – пăшăлтататать Ольăн тути чĕрĕк ĕмĕр каяллахи сăнӳкерчĕке сăнанă май. Шырарĕ Оля Вовăна. Кӳрши «Çурçĕр» тенĕрен унта направлени пама ыйтрĕ диплом илнĕ хыççăн.

Вун-вун çул иртсен тин пĕлчĕç ялта Вова пĕр хушă мĕнле «Çурçĕрте» пулнине. Хĕр хӳттине кĕнĕ кăна темелле, анчах та çав ӳсĕр каччă «пысăк» пуçлăх ывăлĕ пулнă иккен...

Çавăнтах Альбинăпа хут уйăрттарса пĕрлешнĕ вĕсем. Апат-çимĕç тата кирлĕ ытти япала илсе çӳрекен Альбина çав йывăр тапхăрта Вовăшăн чи çывăх çын пулса тăнă ĕнтĕ.

Пурнăç тăршшĕпе тăсăлнă шырав çапла вĕçленнĕ. Акă вăл – Вова, анчах ăнах шыранă-ши?.. Вова, анчах Вова та мар. Чун-чĕри те шăпăрт. Çав кăн-кăвак куçах, анчах вăл тарăн-тарăн «шурлăхра» – тунсăхра. Оля вара савнийĕн куçĕнче ун чухнехи юрату хĕлхемне курасси пирки иккĕленмесĕр вун-вун çул шырарĕ, шанчĕ, кĕтрĕ...

**Н.МАРИНОВА.**

*Левтина МАРЬЕ*

# Асамлӑ Ҫӗнӗ ҫул

*Икӗ пайлӑ юмах пьеса*

**/Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ иртнӗ номерте/.**

ТИЛӖ. Паян Ҫӗнӗ ҫул. Кӗҫех кунта Хӗл Мучи те килсе ҫитӗ.

ЧАКАК. Чак-чак-чак-чак! Вӑл паҫӑр кӳршӗри вӑрмантаччӗ. Эпӗ ӑна халех чӗнсе килӗп. Чак-чак-чак! Кашни вӑрман валли вӑл пӗрер пысӑк та хӗп-хӗрлӗ михӗ, чак-чак-чак-чак, илсе тухнӑ.

МУЛКАЧ. Мӗн унта? Мӗн? Михӗре мӗн? Тен, мана вӑл кишӗр е купӑста парнелет...

ПАКША. Манӑн кӑмпа пӗтнӗччӗ. Тен, вӑл мана типӗтнӗ кӑмпа тыттарать...

КАШКӐР. Эй, сирӗнпе, кӑмпу-кишӗрӳ-качку, у-у-у! Ман валли пӗр-пӗр така пулсан лайӑх пулмалла та. У-у! Вара эпӗ ним тумасӑрах ташла-ташла хӗл каҫаттӑмччӗ. У-у!

ТИЛӖ. Ман валли вара, ман валли... пӗр вунӑ шултра чӑх, ҫуллӑ вунӑ автан пулсан юрла-юрла пурӑнаттӑм. Атя вӗҫтерех, Чакак, мӗн ҫӑварна карнӑ та пӗр хускалмасӑр тӑратӑн?!

ЧАКАК. Чак-чак-чак-чак. Сана мӗн ӗҫ, мӗн ӗҫ? Чак-чак! Вӗҫес тесен вӗҫетӗп, чак-чак, вӗҫес темесен... Чак-чак-чак...

ТИЛӖ. Вӑт сана Чакак те! Тьфу!

ЮМАН. Паянхи каҫ тавлашма намӑс мар-и сире? Чӑрӑша хисеплес вырӑнне...

ЧАКАК. Чак-чак-чак-чак. Ӑнлантӑм, ӑнлантӑм. Чак-чак. Халех, халех Хӗл Мучине чӗнсе килӗп. Чак-чак. Вӗҫтертӗм! Чак-чак!

ЧӐРӐШ. Хӗл Мучи киличчен паллашӑр: Марукпа Илюш, шкул ачисем. Вӗсем тӑрӑшнипе илемлӗ те ӗнтӗ эпӗ.

ПУРТЕ */тӗлӗнсе/.* Чӑнах-и?!

ЧӐРӐШ. Вӗсен кукашшӗ – пирӗн хисеплӗ вӑрман хуралҫи.

ПУРТЕ */савӑнса/.* Чӑнах та-и?!

ЧАКАК. Чак-чак-чак-чак! Килет! Хӗл Мучи килет! Чак-чак!

**Хӗл Мучи ҫитет.**

ХӖЛ МУЧИ. Сывӑ-и, тусӑмсем?

ПУРТЕ. Сывах! Сывӑ пултӑр Хӗл Мучи!

ХӖЛ МУЧИ. Чӑнахах та тӗрӗс пӗлтерчӗ иккен Чакак. Халь эпӗ хам та пӑхса тӑранаймастӑп, мӗн тери хитре сирӗн Чӑрӑш! Ҫакӑн пек хитреленме ӑна кам пулӑшрӗ?

ПУРТЕ. Ӑна Илюшпа Марук тетте ҫакса капӑрлатрӗҫ.

ПАКША. Тата Юман та пулӑшрӗ.

ЧӐРӐШ. Эпӗ паян ҫав тери телейлӗ!

ХӖЛ МУЧИ. Маттур, маттур, ачасем! Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарать. Эпӗ сире ҫакӑн пек туслӑ пулнӑшӑн кама мӗн кирлине шута илсе пурне те пысӑк, чаплӑ парне тыттарӑп. Анчах ҫакна та пӗлес килет: мана савӑнтарас тесе хӑвӑр кӑҫал мӗн хатӗрлерӗр-ха?

ПАКША. Сӑвӑ!

МУЛКАЧ. Юрӑ!

ЧАКАК. Ташӑ! Чак-чак!

ТИЛӖ. Вӑйӑ!

КАШКӐР. Юптару! У-у!

МАРУКПА ИЛЮШ. Хамӑр ӑсталанӑ теттесем!

ХӖЛ МУЧИ. Тавтапуҫ сире, маттурскерсем. Атьӑр-ха чи малтан Чӑрӑш йӗри-тавра карталанар та ӑна халалласа юрӑ пуҫлар!

ПУРТЕ. Атьӑр, атьӑр! Юрлар!

**Кукаҫ сасси илтӗнет.**

КУКАҪ. Марук! Илюш! Мӑнукӑмсем!

МАРУК. Кукаҫ!

ИЛЮШ. Юратнӑ кукаҫи!

**Уява вӑрман хуралҫи васкаса ҫитет.**

МАРУКПА ИЛЮШ. Мӗнле шыраса тупрӑн пире?

КУКАҪ. Капӑр Чӑрӑш таҫтанах курӑнса тӑрать те, хӑвӑртах тупрӑм.

ХӖЛ МУЧИ. Сирӗн кукаҫӑра, вӑрман хуралҫине, чун-чӗререн саламлатӑп, тав тӑватӑп.

**Ҫав самантра капӑр чӑрӑш ялтӑртатса ҫуталма пуҫлать.**

КУКАҪ. Тавах ырӑ сӑмахусемшӗн, Хӗл Мучи.

ПАКША. Ҫитрӗ, ҫитрӗ Ҫӗнӗ ҫул!

МУЛКАЧ. Чӑрӑш ҫӑлтӑрӗ ҫуталса кайрӗ!

ТИЛӖ. Юмахри пек ялкӑшса тӑрать Чӑрӑш!

ИЛЮШПА МАРУК. Асамлӑ Ҫӗнӗ ҫул!

ЧАКАК. Чак-чак! Ҫитрӗ кӗтнӗ Ҫӗнӗ ҫул! Чак-чак! Ҫитрӗ!

КАШКӐР. Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе сире, туссем! У-у-у!

ЮМАН. Саламлатӑп сана, Чӑрӑш тусӑм.

ЧӐРӐШ. Сана та саламлатӑп, Юман тус.

ХӖЛ МУЧИ. Пурне те сире Ҫӗнӗ ҫулта ырлӑх-сывлӑх, ҫирӗп туслӑх, ҫемьере ӑнӑҫу, шкулта лайӑх вӗренме сунатӑп!

ПУРТЕ. Тавтапуҫ!

**Алӑ ҫупаҫҫӗ.**

ХӖЛ МУЧИ. Халӗ вара, тусӑмсем, юрлар, ташлар, выляр, савӑнар!

ЧАРШАВ.






## «Чӑваш хӗрарӑмне» ҫырӑнсам

Кашни шӑматкун килет
Ман юратнӑ хаҫатӑм.
Чӑтӑмсӑр ӑна кӗтеп –
Вӑл ман ҫывӑх юлташӑм.

Юратсах эпӗ вулатӑп
Ун кашни кӑларӑмне.
Ҫавӑнпа та ҫырӑнатӑп
Ҫак «Чӑваш хӗрарӑмне».

Чӑваш Енри хыпарсем
Кӑсӑклантараҫҫӗ мана.
Тӗрлӗ-тӗрлӗ сӗнӳсем
Хушаҫ вӑй-хал пурӑнма.

Шӳтсем питӗ юратап,
Вӗсемсӗр пурнаймастӑп.
Хырӑм тытса ахӑрап,
Ура ҫине тӑраймастӑп.

«Апачӗ тутлӑ пултӑр!» –
Питӗ лайӑх рубрика.
Яланах хырӑм тутӑ –
Ку вӑл, чӑн та, эврика!

Артистсен сӑмахӗсем
Чӗре витӗр тухаҫҫӗ.
Чӑнах та маттур вӗсем,
Питӗ тӗрӗс шухӑшлаҫҫӗ.

«Сӑмах касмӑшӗ» пулсан
Маншӑн вӑл уяв пекех.
Хаҫата пӗрре тытсан
Шутласа тухап пӗтӗмпех.

Телерадиопрограмма
Телевизор курмашкӑн
Питӗ кирлӗ-ҫке мана
Чунӑма йӑпатмашкӑн.

Тӗп редакторне тавах
Ҫак илемлӗ хаҫатшӑн.
Кайран ҫырӑнӑп татах,
Шеллемес укҫа уншӑн.

Хаҫат вуламан этем
Юлнӑ теҫҫӗ пурнӑҫран.
Ҫавӑнпа та итлесем –
«Чӑваш хӗрарӑмне» ҫырӑнсам!

**Алексей СУВАР.**
Вӑрнар районӗ.

**«Чӑваш хӗрарӑмне» 2016 ҫулӑн пӗрремӗш ҫурринче илсе тӑмашкӑн ҫырӑнтару вӗҫленсе пынине аса илтеретпӗр. Тӑванӑрсене Ҫӗнӗ ҫулпа «Чӑваш хӗрарӑмне» ҫырӑнса парнелӗр – ҫур ҫул тав туса пурӑнӗҫ.**



*Любовь МАРТЬЯНОВА*

* * *

Ай-хай пукане
Куҫ хӗсетчӗ.
Тинкеретчӗ ман енне,
Тем пуплетчӗ.
Ӑнланмарӑм сӑмахне
Ун чухне,
Ӑҫтан-ха пӗлӗн чӗлхине
Унӑнне.
«Эп юлатӑп, пӗчӗкскер, –
терӗ пуль,
Эс ӳсетӗн, ҫитӗнетӗн, –
терӗ пуль,
Пурнӑҫ йывӑр, тем те курӑн, –
терӗ пуль,
Кирлӗ туйӑм, кирлӗ тӳсӗм, –
терӗ пуль.
Хальлӗхе ҫеҫ саншӑн пурте
тӑвайкки,
Хальлӗхе ҫеҫ эсӗ савнӑҫ
чӑмакки», – терӗ пуль.

* * *

Асилместӗн те-и, тусӑм,
Шухӑшӑм – инҫет.
Пусӑм хыҫҫӑн – тепӗр пусӑм,
Ҫул та кӗскелет.

Пырасах тесен пыраттӑм,
Кӗтнинех – сисмен.
Ахаль ҫеҫ вӗт вӑй выляттӑн,
Эп те ӗненмен.

Пурпӗрех-ҫке ӳкӗнместпӗр,
Турӑ пӳрни мар.
«Ӗмӗрлӗх эс ҫеҫ» темесӗр
Лӑпкӑн уйрӑлар.
* * *

Юрататӑп «юрамасть»
сӑмаха.
Юрамасть калаҫма –
Калаҫмастӑп.
Юрамасть курӑнма –
Курӑнмастӑп.
Юрамасть юратма -
Юратмастӑп.
Юрамасть... Юрамасть...
«Юрамасть» сӑмаха
юратнишӗн
Хама хам юратмастӑп.

* * *

Эп ун чух вунҫиччӗреччӗ,
Эс те шӑп вунҫиччӗре.
Хурӑн ҫулҫине ӳкерчӗ –
Йӑлт! сиксе илет чӗре.

Савӑнатпӑр та чупатпӑр
Аслӑ улӑх тӑршшӗнче.
Ним ҫукран, ахаль, кулатпӑр,
Вылятатчӗ яш тӗнче.

Куҫ хӗсеттӗн – эй, телейччӗ,
Юрату – юмах екки.
Тем чӗнетчӗ, илӗртетчӗ...
Хам та савнӑҫ чӑмакки.

Ҫиле хирӗҫ йӑс ҫӗмрен пек
Вирхӗнеттӗмӗр таҫта.
Вӑйлине те ҫӗнтеретпӗр...
Ӑҫта ҫав вӑхӑт, халь – ӑҫта?

Аслатиллӗ ҫумӑр витӗр
Ыткӑнатпӑр алла-ал.
Кам телейлӗ – килӗр, килӗр,
Ӳт-пӳре вылять вӑй-хал.

Ҫепӗҫ юрӑ, кӑлтӑр кулӑ
Яланах ӑшра, чунра.
Шутламан ун чух: мӗн пулнӑ,
Мӗн кӗтет умра, малта?..

* * *

Ырӑ ҫыннӑм!
Ҫӳлелле ҫӗклесен те алла
Санран ҫӳлерех пулаймастӑп.
Эс – туйӑм.
Туйӑмран пысӑкрах
пулайратӑн-и?
Эс – кӗвӗ.
Кӗвӗрен пысӑкрах
пулайратӑн-и?
Эс – ахрӑм.
Ахрӑмран пысӑкрах
пулайратӑн-и?
Эс – юратун пӗр пӗчӗк сӗмӗ
ҫеҫ пулсан та –
Манран эс пысӑкрах.
Эс – ӗмӗтӗн ҫӗр пин тӗпренчӗкӗ
пӗр чӗптӗмӗ пулсан та –
Манран эс пысӑкрах.
Ырӑ ҫыннӑм...

* * *

Паллаймарӑм ун чух эп ӑна...
Вӑл ун чух –
Ӗмӗт-кайӑк –
Хӗп-хӗрлӗ ҫырлаччӗ.
Йӗкӗлтетчӗ:
«Ҫырла эп, ҫырла,
Татса ил-ха пӗр ывӑҫ.
Касиччен ҫут ҫурла».

Каярах –
Ӗмӗт-кайӑк –
Йӑрӑс пӳллӗ те шухӑ
пӑланччӗ.
Илӗртетчӗ
«Пӑлану эпӗ сан,
Эп – пӑлан,
Хӑвала, тытса чар
Пултаратӑн пулсан».

Е тата каярах –
Ӗмӗт-кайӑк –
Ҫутӑ уйӑхӑн ҫутӑ ҫутиччӗ.
Ӳкӗтлетчӗ:
«Ҫул ҫути эпӗ сан,
Кун ҫути,
Утӑмла,
Усси ҫук
Кирлинчен ытларах
шутласан».

Паллаймарӑм ун чух эп ӑна...
Ак паян...
Шупка уйӑхӑн тӗссӗр ҫути...
Ешӗл курӑк синче
Шух пӑлан пусса иртнӗ
хӗп-хӗрлӗ ҫырла...

* * *

Тахҫанхи сӑмаха-и шыратӑн?
Пытаратӑп ӑна эп пӗрех.
Шурлӑх ҫӑтнӑ тупра пек ҫав
ылтӑн
Сӑмаха каламастӑп нихҫан
та текех.

Суракан сурана чӗрнӳпе
хӑпӑтассӑн
Тинкеретӗн хӑш чух эс чеен.
Ҫаврасил тулласан та
кас-кассӑн
«Пӗччен» ят сӑмаха
ирттеретӗп пӗччен.

Ҫурхи ҫил саншӑн ҫеҫ
килеймест вӗт,
Маншӑн та ҫурхи сад ешерет.
Кӑмӑла ҫурхи кун
ҫӗклеймест тӗк,
Кӗрхи ҫулҫӑ ташши ҫӗклейрет.





ВЛАÇ

# Президент арăмĕ пулма çăмăл-и?

Президент мăшăрĕн тивĕçĕсен явапláхĕ юлашки çулсенче, протоколпа килĕшÿллĕн, Раççейре те ÿсрĕ. Ăна çĕршыв ертÿçин указĕсемпех çирĕплетеççĕ. Хĕрарăмăн ют çĕршывсен ертÿçисемпе упăшкипе пĕрле тĕл пулмалла, вĕсем Раççее килнĕ чухне пĕрле кĕтсе илмелле.

Президентăн мăшăрĕ общество пурнăçне, гуманитарлă тата социаллă ытти программăна хастар хутшăнать. Çав вăхăтрах унăн, ытти çĕршыври пек, хăйĕн офисĕ те, халăха йышăнмалли ятарласа палăртнă сехетсем те çук. Хĕрарăм официаллă мероприятисене, культура акцийĕсене хутшăнать, ача çурчĕсене, медицина учрежденийĕсене пулăшать.

Ют çĕршывсен ертÿçисемпе иртекен тĕлпулусем протокол енчен питĕ кăткăс шутланаççĕ, йышăнакан ен тата хăрушсăрлăх службисен палăртнă условисене тивĕçтерме тăрăшаççĕ – вак-тĕвек таранах.

Телее, кун пек тĕлпулусен иккĕмĕш пайĕ пур – "уйрăм харпăрлăхри вăхăт" ятлă вăл. Хĕрарăм кун пек чухне официаллă мероприятисенчен канать, библиотекăна, музейсене, социаллă центрсене çÿрет.


НИНА ХРУЩЕВА.


ВИКТОРИЯ БРЕЖНЕВА.


РАИСА ГОРБАЧЕВА.


НАИНА ЕЛЬЦИНА.


ЛЮДМИЛА ПУТИНА

### Ют çĕршывра

Йăлана кĕнĕ тăрăх, ют çĕршыв президенчĕсен арăмĕсем патшалăх шайĕнчи кăткăс ыйтусене татса пама та хутшăнаççĕ. АПШ президенчĕн мăшăрĕ Хилари Клинтон Шурă çурт ĕç-хĕлне самай витĕм кÿнĕ. Америка историйĕнче ун пекки урăх пулман. Вăл кабинет членĕсен шайĕнчех туйнă хăйне. Клинтон, мăшăрĕ пĕрремĕш хут çĕршыв тилхепине хăйĕн аллине илсен, сывлăх сыхлавĕн реформине иртернĕ. Иккĕмĕш срок вăхăтĕнче арçын арăмне ют çĕршывсене дипломат полномочийĕсемпе янă. Çак ĕçе хĕрарăм тÿлевсĕрех пурнăçласа пынă.

Президент мăшăрĕн тивĕçĕсене пунăçламашкăн Шурă çуртра ятарлă аппарат тытса тăраççĕ – унта 15 çынна яхăн. Аппарат ертÿçи – президент пулăшуçи, унăн заместителĕ – министр заместителĕ шайĕнче. Çак должноçсенче президент хăй çирĕплетет.

Франци президенчĕн арăмĕн тивĕçĕсене протокол шайĕнче официаллă палăртмаççĕ. Бернадетт Ширак мăшăрĕпе пĕрле ют çĕршывсене çÿренĕ: официаллă мероприятисене хутшăннă. Ун пек чухне хĕрарăм арçын хыçĕнче тăнă. Президент хĕрлĕ хăйăва мăшăрне алăран çавăтмасăрах касма хăнăхнă.

Бернадетт официаллă визитсене хатĕрлес ĕçе хăйĕн ирĕкĕпе хутшăннă. Ыркăмăллăх енĕпе вара хĕрарăм упăшкине президента суйличченех палăрнă. 1989 çулта вăл "Пон-Неф" ассоциаци йĕркеленĕ. Вăл Раççей, Хĕвелтухăç Европа тата Франци çамрăкĕсен культура çыхăнăвне аталантарма пулăшнă. Ассоциаци стипенди палăртать, куравсене укçа-тенкĕпе тивĕçтерет, артистсемпе художниксене премипе хавхалантарать.

Бернадетт Ширак çавăн пекех – "Париж больницисем – Франци больницисем" фонд ертÿçи те пулнă. Вăл ертсе пынипе 1997 çулта 4,5 млн доллар пухма май килнĕ. Унпа чирлĕ ачасене пулăшмашкăн усă курнă. Франци МИХĕсем вăхăт-вăхăт Бернадетт Ширак ачасем валли хăй шутĕнчен теттесем туянни пирки çырнă.

### Раççейре

Раççей президенчĕн арăмĕ те официаллă тата ĕçлĕ мероприятисене хутшăнать. Унсăр пуçне вăл общество ĕçĕнче палăрать – культурăра е сывлăх сыхлавĕнче.

Нина Хрущева, пĕлекенсем каласа кăтартнă тăрăх, питĕ ырă кăмăллă хĕрарăм пулнă. Лайăх пĕлÿ илнĕ, акăлчанла аван калаçнă. Никита Сергеевич ăна пуçласа Америкăна пĕрле илнĕ. Калас пулать, çакăншăн каярах та пăшăрханман – хĕрарăм хăйне тивĕçлĕ шайра кăтартма пултарнă. Анчах та каярахпа темĕн пулса иртнĕ, Нина Петровна чикĕ леш енне сайрарах та сайрарах тухса çÿреме пуçланă.

Виктория Брежнева çынпа хутшăнма юратсах кайман, çавăнпах-тăр ниçта та тухса çÿремен. Леонид Ильич çулçÿреврe пĕччĕнех пулнă. Мускавра иртекен пĕр мероприятирен те юлман вара хĕрарăм. Политбюро членĕсен арăмĕсем пĕр-пĕринпе хутшăнсах тăнă. Вĕсен хушшинчи çыхăнăва вăйлатас тĕллевпе хĕрарăмсем валли ятарласа мероприятисем йĕркеленĕ.

Раиса Максимовна та малтан вĕсене хаваспах çÿренĕ, хĕрарăмсен клубне йĕркелес шухăш та çуралнă унăн, анчах та каярахпа вăхăт çитми пулнă. Пушшех те, Горбачев мăшăрĕ Политбюро членĕсен арăмĕсенчен 25-30 çул кĕçĕнрех пулнă. Çапла вара тĕлпулусенче курса калаçнипех çырлахнă. Унсăр пуçне Раиса Максимовна Д.С.Лихачев академик ертсе пыракан культура фончĕн вицепрезиденчĕ пулнă.

Раиса Максимовна яланах аталанма тăрăшнă. Михаил Сергеевич КПСС Тĕпкомĕн генеральнăй секретарĕ пулса тăрсан хĕрарăм пуçĕпех общество ĕçне путнă. Ют çĕршывсене тухас умĕн вăл уйрăмах тĕплĕн хатĕрленнĕ. Справочниксем тишернĕ, çи-пуç суйланă.

1985 çул. Çĕршывра лару-тăру начарлансах пырать. Япала та тупса илме çук. Раиса Максимовнăн тумтирĕ вара – Ив Сен-Лоранран е Диортан пачах та кая мар. Мĕн тăвăн – протоколпа килĕшÿллĕн, президент мăшăрĕн пĕр кĕпепе темиçе мероприятие çÿреме юрамасть. Çав вăхăтра Совет Союзĕнче Слава Зайцевăн модель çурчĕ усăлнă. Раиса Максимовна унта çÿренĕ. Пусма-тавара вăл чикĕ леш енчен илсе тавраннă, модельсене журналсенче пăхнă.

Раиса Максимовна Чехире кăларнă бижутерие кăмăлланă. Чехословакири Яблонец хулинче вĕсене ятарлă завод продукцийĕпе паллаштарнă. Кевĕр евĕр мăй çыххисене шăпах унта туяннă та. Чи хакли 30 тенкĕ пулнă.

Ĕненме те йывăр – анчах та генеральнăй секретарĕн арăмне ют çĕршыва каймашкăн укçа-тенкĕ нумай уйăрман. Михаил Сергеевича командировкăшăн талăкне 37,5 доллар тÿленĕ. Раиса Максимовнăна, делегаци членне – 24. Франци посольствинче, Горбачев унта пĕрремĕш хут пынă чухне, парфюмери тата бижутери куравне йĕркеленĕ. Пĕрремĕш леди мĕншĕн вак-тĕвек кăна туяннине никам та ăнланман-тăр. Японире, Индире те çавах. Раиса Максимовнăна ытлашши укçа никам та уйăрса паман.

Раиса Максимовна упăшкине пăркаланă анчах теççĕ. Анчах та вĕсене çывăх пĕлекенсем çакна çирĕплетмеççĕ. Çакă пирĕн çĕршывăн ертÿçин мăшăрĕ обществo пурнăçне пĕрремĕш хут çапла хастар хутшăннипе çыхăннă-тăр...

Наина Иосифовна та палăрнă ку енĕпе. Борис Николаевич çĕршыв тилхепине алла илнĕ чух çемье пысăк пулнă: икĕ хĕрĕ те качча тухса пĕрле висĕ мăнук парнелеме ĕлкĕрнĕ ашшĕ-амăшне /халĕ иккĕшĕн те висшер ача/. Çемье пĕрлех пурăннă, кукамăшĕн ларса-тăма та вăхăт пулман.

Урал тăвĕсен çирĕплĕхĕ куçнă пулĕ çак хĕрарăма. Проект институтĕнче ĕçлекенскер ахаль çын пурнăçне питĕ аван пĕлнĕ. Лена унти политехника институтĕнчен вĕренсе тухнă, Таня МПУра ăс пухнă. Ĕç нумайăшне пăхмасăрах Наина Иосифовна яланах илĕртÿллĕ тăхăнма пĕлнĕ. Çав хушăрах унăн нимĕнле модельер та пулман. Тен, хĕрсен сĕнĕвĕсемпе усă курнă. Çапах та 90-мĕш çулсенче пирĕн çĕршывра пурнăç аванах пулнă теме çук.

Наина Иосифовна яланах упăшкин сарлака çурăмĕ хыçĕнче пулма тăрăшнă. Ыттисене пулăшма ăнтăлнă. Вăл та, Раиса Максимовна пекех, ачасен программипе ĕçленĕ. Анчах та нимĕнле ассоциаци е президиум членĕ пулма та ним тусан та килĕшмен.

### Арăмĕпе упăшки – çÿпçипе хупăлчи

Тĕрлĕ çĕршывăн пĕрремĕш ледийĕ хăйне майлă... Нэнси Рейган. Сивĕ, çирĕп, кăмăл-туйăмне нихăçан та пĕлме çук. Илона Чаушеску. Парти лидерĕ, кăмăлĕпе арçынран та çирĕпрех. Барбара Буш. Усă кăмăллă, ырă чунлă, калаçура йăл кулать, сăпайлăн хутшăнать. Уншăн тĕп вырăнта – мăшăрĕ, ачисем. Ывăлĕсенчен пĕри президент пуканне йышăнчĕ, тепри – сенатор. Хана Лора Коль. Питĕ хăйне евĕрлĕ, характерĕ йывăр, анчах упăшкишĕн – тивĕçлĕ арăм. Парижра патшалăхсен ертÿçисен мăшăрĕсене Версале илсе кайнă, журналистсен пĕр пайĕ вĕсенчен юлман. Сĕтел хушшине вырнаçнă чухне Хана Лорăна видеокамера кĕтесси хытах лектернĕ, çитменнине – шăпах ĕнсерен. Хĕрарăма больницăна илсе кайнă. Анчах Хана тепĕр кунах тухнă унтан, ыттисемпе пĕрлех тĕлпулусене хутшăннă, журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă.

Çÿллĕ шайри чиновниксене сăнама кăсăклă. Калăпăр, Миттерансем. Горбачев 1931 çулта çуралнă, Миттеран – 1916... Франци президенчĕ чирлĕ, мăшăрĕ уншăн кулянни куçĕнче те палăрать. Жак Ширак кăмăлĕ питĕ усă, Бернадетт ăна ытлашшипех усăлса каясран тытса тăрать тейĕн. Анчах та хĕрарăма куçран пăхатăн кăна, унта – ăшăлăх, савăнăç. Хилари Клинтон чунран йăл кулмасть – çакă та унăн куçĕнче тÿрех курăнать. Билл Клинтонпа хутшăнма хăтлăрах.

Анчах кирек епле пулсан çĕршывсен ертÿçисен арăмĕсем пĕр-пĕринпе ăнланса, ăшшăн хутшăнма тăрăшаççĕ. Кăмăлĕсене ирĕке яма çапах та статус чарать пулинех – упăшкисене начар ят илттермелле мар вĕт вĕсен. Тĕлпулусене тĕплĕн хатĕрленеççĕ, справочниксем вулаççĕ. Кирек епле пулăм пирки те пĕлсе тăраççĕ, анчах та ун пирки комментари памаççĕ.

Людмила Путина Вырăс чĕлхине тĕпчекен центра ертсе пырать, унăн ĕçне пропагандăлать. Ку питĕ явапла тă кăткăс ĕç. Енчен те тĕнчере вырăсла калаçакан е калаçас текенсен йышĕ ÿссех пырсан çĕршывсем Раççейпе лайăхрах хутшăнĕç. Паян акăлчан чĕлхи пуç пулса пырать. Маларах кăна-ха дипломатсем французла калаçнă пулсан халĕ ытларах – акăлчанла. Анчах та чĕлхене пĕлмесен тĕнче вырăс литературине те, культурине те – урăхла каласан, вырăс чунне – нихăçан та ăнланаймĕ.

### Арçын шовинизмĕ чакать

Совет тапхăрĕ хыççăн çакă вăй илчĕ – пирĕн президентсен арăмĕсем общество пурнăçне хастартарах хутшăнма тытăнчĕç. Çакна общество та хăнăхса пырать. Арçын шовинизмĕ вара майĕпенех чакать. Шел те, пысăк та явапла постсене çаплипех ытларах арçынсем йышăнаççĕ. Раççейĕн ют çĕршывра пĕр хĕрарăм посол та çук, çав вăхăтрах ытти патшалăхсен – 5-10. Правительствăра та хĕрарăм сахал. Юрать-ха бизнесра, ăслăлăхра, культурăра харсăрлăхпа, пултарулăхпа ытларах та ытларах палăрса кăткăс ыйтусене татса парать хĕрарăм. Чи çÿлти шайра та лару-тăру улшăнмасăр пултараймасть паллах.

### Ачасем

Çав вăхăтрах президентсен ачисем политикăна хутшăнсах кайман. Икĕ тĕслĕх кăна паллă. Клод Ширак тата Татьяна Дьяченко ашшĕсен канашçисем пулнă. Анчах иккĕшĕнчен пĕри те ĕçлĕ калаçусене хутшăнман. Пĕррехинче Билл Клинтон Раççее хĕрĕпе Челсипе килни паллă – пепкине вăл пирĕн çĕршыва кăтартма илсе килнĕ.

Кемп-Дэвидри тĕлпулусене Буш ачисемпе мăнукĕсене илсе пынă, вĕсем хăнасемпе те хутшăннă. Анчах М.Горбачев та, Б.Ельцин та нихăçан та никама та пĕрле илсе пыман унта.

Жак Ширака хĕрĕ пулăшма пуçласан та, Борис Ельцин Татьянăна хăйĕн пулăшуçи пулма шансан та сивлесе калаçакан нумай тупăннă – Францире те, Раççейре те. Анчах та Татьяна ашшĕ чирлесен штабра ĕçленине, протокол тытса пыма пулăшнине, президент ĕç-хĕлне йĕркелесе пынине никам та асăрхасшăн пулман...

("Кремлевские куранты").



## ЛĚП-ЛЕП



● САМАХСĂРАХ.

– Мускавра çěр те пур теççě-ха санăн... Ăçта вара?
– Чўрече янаххинче – виçě куршак...

* * *

Корпоратив хыççăн ěçсе яман эрех юлчě-и? Апла коллективра татса паман ыйтусем пур...

* * *

– Ěнер корпоратив мěнпе вěçленчě вара? Нимěн те ас тумастăп...
– Хам та ас тумастăп-ха, анчах та ыттисем каласа кăтартнă тăрăх, эсě ěçсе лартнă та стриптиз ташланă.
– Пулма пултараймасть! Эпě стриптиз ташлама пěлместěп!
– Пěлместěн терěç çав...

* * *

– Кěсйинче миллион доллар та çук çын хăй пирки телейлě теме пултарать-и?
– Паллах. Çынна суйма чарăн-и вара?

* * *

Арçын ачине садикрен илсе таврăннă та хăвăртрах телевизор умне вырнаçнă. Арăмě кухньăран кăшкăрать:
– Вăт тăмсай фанатик! Эсě ют ачана илсе килнě!
– Ан кăшкăр, хěрарăм, – тет арçын. – Ачана апат çитер те çывăрма вырттар – ыран улăштарăпăр.

* * *

– Чунăм, эпě ачана садикрен илсе килтěм.
– Вăт маттур! Мěнле ят хурăпăр? Атту хамăрăн шкулта вěренет...

* * *

Раштав уйăхě çитсен пурте Çěнě çула ăçта кěтсе илесси пирки пуç ватма пуçлаççě. Эпě çак ыйтăва çурла уйăхěнчех татса панă – çěнě диван туянтăм.

* * *

Ěçкěре хамăн ěçес килменнине пěлтеретěп – пурте вăйпах ěçтереççě, çиес килменнине калатăп – хистесех çитереççě. Укçа çуккине те хам питě шăппăн калатăп вара, те вěсем тăруках начар илтме пуçлаççě?

* * *

– Атте, анне, паллашăр – ку... ку... ку пирěнпе пурăнма пуçлě...

* * *

Хăнасене тěлěнтертěм-ха паян – хăйсем пирěн пата çитиччен эпě вěсем патне маларах çитрěм! Курасчě вěсен сăнěсене сирěн...

* * *

Ěнер лавккара кетчуп туянтăм – 65 тенкěпе. Паян лавккана кěтěм те çав кетчупа йўнěрех хакпа сутнине пěлтěм. Патне пырса пăхрăм та: "Малтанхи хакě 95 тенě, хальхи 75" тесе çырнине асăрхарăм. Юрать-ха ěнерех туянтăм, йўнетессе кěтмерěм...

* * *

– Пěр вăхăт ман патра пурăнăн, – тет каччă хěре. – Ирхине вара килне кайăн.

* * *

Упăшкапа иксěмěр вырăн çинче тинех пěр чěлхе тупрăмăр: ěнер иксěмěрěн те пуç ыратрě...

* * *

Паянхи хаксем юлташсенчен хăшě-пěри сирěншěн чăннипе питех çывăхах та маррине çирěплетеççě...

* * *

Пилěк çулти арçын ачана параппан парнеленě хыççăн çав подъездра пурăнакансен канăçě пěтнě – шăпăрлан çěрěн-кунěн пăнтăртаттарнă. Пěрремěш хутра пурăнакан ватă пурне те çăлса хăварнă. Хайхискер ача патне пынă та:
– Унăн ăшěнче мěн пуррине пěлетěн-и эсě? – тенě...

* * *

Каччăсем илемлě, ăслă, ырă кăмăллă арăм пирки ěмěтленеççě. Тěлěнмелле те, арçынсен ěмěчěсем те вěсеннипе пěр килеççě.

* * *

– Пěрремěш тěлпулăва пикене ресторана илсе кайсан арçын унран мěн илтесшěн?
– Мěн илтесшěн, мěн илтесшěн? "Уй, мěн тери хаклă кунта, атя тўрех ман пата каятпăр", – тенине.

☺И-ХИ-ХИК☺


## РЕКЛАМА ТАТА ПĚЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-960-307-31-51.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич,** блоки. Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**24.ГРАБЛИ, косилки**, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.КИРПИЧ** М125, М150; **керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

**814.БОЧКИ** 200 л., металлические с крышкой, хомутом. **Т. 89613429059.**

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**800.ДОМ** в любом состоянии. Т. 8-902-663-90-45.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-967-471-50-70.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**745.Утепление домов ПЕНОИЗОЛОМ.** Гарантия. Скидки. Т.380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

### ĚÇ/РАБОТА

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

### ПАЛЛАШУ КĚТЕСĚ

Порядочный, добрый, простой мужчина /40х170х70/, чуваш познакомится с доброй, умной, красивой женщиной от 26 до 42 лет. Т. 8-937-942-17-20.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам, 28-83-70, 56-04-17.


## ПĚЛЕТĚР-И?

# Пěччен-тěк минтер туян

Яппунсем тем те пěр шухăшласа кăларма ăста. Тěнчене вěсем пěччен çынсен минтерне кăларма пуçланипе тěлěнтерме те ěлкěрнě. Малтанах, паллах, меллě минтер шухăшласа тупма палăртнă. Лăпкă çывăрнă çын лайăхрах ěçлет-çке. Çакă вěсемшěн чи пěлтерěшли. Хěрарăмсене вěсем арçын хулпуççийě евěр минтер сěнеççě, арçынсене вара – хěрарăм пěççи евěрли.

# Кушак пеккисене килěштереççě

Кушака пěччен хěрарăмсен чěрчунě теççě. Анчах Америкăра ирттернě ыйтăм çакна хирěçлет. 200 çынран 145-шě хěрарăм кушак усрани лайăхрах пулнине палăртнă. Кушакра шăпах туйăмлăх, çепěçлěх, вăрттăнлăх пур-мěн, хěрарăмра та çак енсене килěштереççě вěсем. Кушак усракансем çынна çавăрма пултараççě, хирěçмеççě, анчах хăйсене те кўрентерме памаççě иккен. Сирěн савни е упăшкăр кушак юрататъ-и – эппин, вăл юрату вăрттăнлăхěсене пěлет, сирěнпе тимлě, çепěç пулě, анчах айккине чупма та хирěçлемě.



# Савăт-сапа çěмěрмелле

Хěрарăмсем арçынсенчен туйăмлăрах. Вěсене час-часах тарăхнине е савăннине хăйсенче тытма пултарайманшăн ятлаççě. Анчах кăлăхах иккен. Çав туйăма кăларса яманнипе тěрлě чир-чěр аталанма пултарать. Арçынсем йăлтах шалта тытаççě, анчах вěсем ку е вăл пăтăрмах пирки часах манаççě, çавăнпа лăпкăн пурăнаççě. Хěрарăмсем вара тарăхнине, хурланнине кăлармасан хăйсен ăшěнче çунса çўреççě, çакна пулах нерв тытăмě, шалти органсем сиенленеççě. Çавăнпа никам курман чухне /çын кăмăлне пăсас мар тесе/ турилкке çěмěрмелле, кăмăл туличчен ятлаçмалла, кăшкăрашмалла. Кайран хăвăра мухтама та манмалла мар.


« ХЫПАР »
Издательство çурчě" автономи учрежденийě

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĚ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĚ

Директор-тěп редактор тивěçěсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

Чăваш Хěрарăмě

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийěсен тата массăллă коммуникацисен тытăмěнчи тěрěслев служби 2013 çулхи апрель уйăхěн 30-мěшěнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленě.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĚ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчě, 13, Пичет çурчě
ЫЙТСА ПĚЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тўлевлě информаци материалěсем "Реклама çинчен" Федераци саккунěн 2 ст. килěшўллěн "Аталану çулěпе", "Ят-сум", "Ěç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççě.

Номере 11.12.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчě» АУ техника центрěнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийěнче пичетленě.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13.
64-24-01 – издательство директорě.
Тираж 7454. Заказ 4792.